24-мĕш çул тухать. Хакĕ 10 пус.

1941
ЯНВАРЬ
7
ЫТЛАРИКУН
5 (5720) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

ЧĂВАШ КОММУНИ

ЯЛХУÇАЛĂХ КУЛЬТУРИСЕН ТУХĂÇЛĂХНЕ ТАТА ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХСЕН ПРОДУКТИВЛĂХНЕ ÝСТЕРНĔШĔН УКРАИНА СС РЕСПУБЛИКИНЧИ КОЛХОЗНИКСЕНЕ ĔÇШĔН ХУШСА ТÝЛЕССИ ÇИНЧЕН

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă постановлени

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ çакна палăртаççĕ: УССР ялхуçалăхĕнче, ВКП(б) XVIII съезчĕн решенийĕсене никĕсе хурса ĕçленине пула, сталинла виççĕмĕш пятилетка çулĕсенче ялхуçалăх артельне организацилепе хуçалăх тĕлĕшĕнчен çирĕплетес, колхозсен обществăллă харпăрлăхне аталантарса тĕреклетес, тырпул тухăçлăхне хăпартас, колхозсенчи выльăх-чĕрлĕх фермисене аталантарас, обществăллă фондсем тăвас тата колхозлă хресченсен пĕтĕм материалла-культурăллă пурнăçне çĕклес тĕлĕшпе чылай ÿсĕмсем тунă.

Колхозри дисциплинăна малалла çирĕплетсе пырас ĕçре пысăк çитĕнÿсем тунă, колхозсенче ĕç тухăçлăхĕ ÿснĕ.

Колхозсенчи обществăллă çĕре салатса пĕтересрен сыхламалли мерăсем çинчен, колхозсенче обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатмалли мероприятисем çинчен, ялхуçалăх продуктисен заготовкипе закупкисене ирттерес политикăри улшăнусем çинчен ЦК ВКП(б) тата СНК СССР йышăннă постановленисене пурнăçа кĕртнине пула, Украина СС Республикинчи колхозсенче 1940 çулта, 1938 çултипе—виççĕмĕш пятилеткăн пĕрремĕш çулĕпе танлаштарсан, тĕштырă культурисен тухăçлăхĕ — 33 процент, хĕвелçавăрăнăш тухăçлăхĕ—44 процент, çĕрулми тухăçлăхĕ—42 процент ÿснĕ, сахăр кăшманĕпе ытти техникăллă культурăсен тухăçлăхĕ те чылаях ÿснĕ.

1939 тата 1940 çулсенче колхозсен фермисенче майракаллă шултра выльăхсен хисепĕ 70 процент, сыснасен хисепĕ 83 процент, сурăхсен хисепĕ 101 процент ÿснĕ. УСС Республикинчи колхозсенчен 94 проценчĕ ытла выльăх-чĕрлĕх ферми виçшер тата чăхчĕп ферми пĕрер тытаççĕ.

Колхозсен ĕç опычĕ çакна кăтартса пачĕ: бригадăсенче, звеносенче, выльăх-чĕрлĕх фермисенче колхозниксен ĕçне тĕрĕс организацилеnĕ тата ялхуçалăх ĕçĕсен пахалăхне лайăхлатнă колхозсенче хуçалăхри çитĕнÿсем уйрăмăнах пысăк.

Запорожье облаçĕнчи Геническ районри Сталин ячĕпе тăракан орденлă колхоз 1940 çулта 3.620 гектар çĕр çинче мĕнпур тĕштырă культурисене гектар пуçне 19-шар центнер туса илнĕ. Çав колхозăн бригади (бригадирĕ Лушник) 79 гектар çĕр çинче тĕштырăсем гектар пуçне 20,4-шер центнер туса илнĕ.

Полтава облаçĕнчи Хорольский районри «Нове життя» колхоз 1940 çулта кĕрхи тулă вăтамран гектар пуçне 19,4-шар центнер пухса кĕнĕ. Çав колхозăн бригади (бригадирĕ Олейниченко) гектар пуçне 34,7-шер центнер пухса кĕнĕ.

Полтава облаçĕнчи Гадячский районри «Нове життя» колхоз 66 гектар çĕр çинче ыраш гектар пуçне 31-шер центнер туса илнĕ. Вăл колхозăн бригади (бригадирĕ Найда) 11 гектар çĕр çинче гектар пуçне 50,4-шер центнер туса илнĕ.

Киев облаçĕнчи Кагарлык районĕнчи «Тракторобуд» колхоз 135 гектар çĕр çинче урпа гектар пуçне 28-шар центнер туса илнĕ. Çав колхозăн бригади (бригадирĕ Тесленко) 29 гектар çĕр çинче гектар пуçне 30-шар центнер туса илнĕ.

Киев облаçĕнчи Тальнов районĕнчи Петровский ячĕпе тăракан колхоз 74 гектар çĕр çинче сĕлĕ гектар пуçне 28-шар центнер туса илнĕ. Вăл колхозăн бригади (бригадирĕ Халупа) 14 гектар çĕр çинче гектар пуçне 29-шар центнер туса илнĕ.

Социализмлă ăмăртăва пула, колхозсенчи производствăллă бригадăсенче кăшман, йĕтĕн, кантăр, çĕрмамăк, çĕрулми, вир, кукуруза, хĕвелçавăрăнăш тата сайра лартса ÿстермелли ытти чылай культурăсене пысăк тухăçпа туса илекен звеносем шăтса тухрĕç.

Бригадăсенче сахăр кăшманĕ тата сайра лартса ÿстермелли ытти культурăсене тĕлĕпше звеносем организацилени çав культурăсен тухăçлăхне ÿстерес ĕçре питех те пысăк вырăн йышăнса тăнă.

Винница облаçĕнчи Джулинский районри Ленин ячĕпе тăракан колхозра 1940 çулта гектар пуçне вир — 48 центнер, кукуруза — 42 центнер тата сахăр кăшманĕ—302 центнер пухса илнĕ. Вăл колхозри малта пыракан Бортницкая юлташ звени вара гектар пуçне вир — 61 центнер, кукуруза — 51 центнер, сахăр кăшманĕ — 347 центнер пухса кĕнĕ.

Житомир облаçĕнчи Радомышль районĕнчи Петровский ячĕпе тăракан колхозра çĕрулми гектар пуçне 225-шер центнер пухса илнĕ, çав колхозри М. С. Худолей юлташ ертсе пыракан чи лайăх звено вара çулран çулах 3 — 4 хут пысăкрах тухăç паратьăсăмахран, 1936 çулта звено гектар пуçне 781 центнер, 1938 çулта — 885 центнер, 1940 çулта 1.285 центнер туса илнĕ.

Житомир облаçĕнчи Черняхов районĕнчи Перше Травня ячĕпе тăракан колхозри звеньевой Надежда Заглада 1939 çулта пĕр гектар çинчен 33 центнер йĕтĕн сÿсĕ туса илнĕ.

Житомир облаçĕнчи Емильчинский районри Петровский ячĕпе тăракан колхозăн звеньевойĕ Саух Ефросинья 1940 çулта гектар пуçне 39,06-шер центнер йĕтĕн сÿсĕ пухса илнĕ.

Малта пыракан звеносем кантăр, махорка, табак, кок-сагыз тата ытти чылай культурăсен тухăçне те вăйлăн ÿстерчĕç.

Малта пыракан колхозсем выльăх-чĕрлĕх отраслинче те унăн продуктивлăхне çĕклес тĕлĕшпе юлашки çулсенче чылай пысăк çитĕнÿсем турĕç.

Выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçе тĕрĕс организацилеnĕ колхозсем уйрăмăнах пысăк ÿсĕмсем турĕç.

Сумы облаçĕнчи Лебединский районри «Червона зоря» колхоз доярĕ орденоносец И. Т. Хобот 1940 çулти 10 уйăх хушшинче хăйне çирĕплетсе пама ĕнесенчен вăтамран тăрантаракан кашни ĕне пуçне 6.387 литр сĕт суса илнĕ.

Харьков облаçĕнчи Харьков районĕнчи М. Коцюбинский ячĕпе тăракан колхоз доярки Е. Ф. Надточий 1940 çулти 10 уйăх хушшинче тăрантаракан кашни ĕне пуçне вăтамран 4.306 литр сĕт суса илнĕ.

Сталино облаçĕнчи Б. Янисольский районри «Нове життя» колхозăн сысна ферми (ферма заведующийĕ В. Т. Ловкуненко) 1940 çулти 10 уйăх хушшинче кашни ама сысна пуçне 21,8 çурă илсе ÿстернĕ, тата 135 сысна пăхса ÿстернĕ, вĕсем кашнинех вăтамран 111-шер килограмм туртнă е колхозри çĕр площачĕн кашни 100 гектарĕ пуçне 10-шар центнер тивет.

Сталино облаçĕнчи Мариуполь районĕнчи «Коммунар» колхоз свинарки К. А. Нежинская 1940 çулта 28 сысна пăхса ÿстернĕ, вĕсем кашни вăтамран çĕрĕ халлĕн 165-шер килограмм туртнă.

Днепропетровск облаçĕнчи Перещепинский районри «Труд» колхозăн чабанĕ Ф. З. Коваленко 1940 çулта 224 çурăхран 457 путек илнĕ е кашни 100 çурăх пуçне 204-шар путек илнĕ.

Малта пыракан бригадăсен, звеносен тата районсен çитĕнĕвĕсем çакна кăтартса параççĕ: пур колхозсенче те пурнăçлама май пур агротехникăллă, зоотехникăллă мероприятисене вăхăтра тата тĕрĕс пурнăçа кĕртсен, кашни колхоз, кашни бригада, кашни звено тата ферма пысăк тухăçлă тырпул туса илме, выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне хăпартма пултарать, çакă вара колхоз дохочĕсене тата колхозниксем тунă ĕçĕн хакне чылаях ÿстерет.

Çапах та, пысăк тухăçлă тырпул туса илес тата выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне хăпартас ĕçре малта пыракан колхозсем, бригадăсем тата звеносем чылай пысăк çитĕнÿсемех тунă пулин те, вĕсен опытне халлĕхе çителĕклĕ таран анлăн сарман-ха.

Колхозсенче, пысăк тухăçлă тырпул туса илекен тата малта пыракан звеносемпе тата бригадăсемпе пĕрлех, çавнашкал условисенчех тырпул сахал туса илекен бригадăсемпе звеносем те пур.

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансен опычĕпе колхоз производствинче анлăнах усă курсан, ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне пĕтĕм облаçра тата республикăра нумай çулерех хăпартма пулать.

ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) çапла шутлаççĕ: тырпул тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне хăпартма чăрмантаракан пысăк сăлтавсенчен пĕри вăл — пысăк тухăçлă тырпул туса илекен тата выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ÿстерекен, малта пыракан колхозниксене çĕшĕн тĕрĕс мар тÿлени пулса тăрать.

Колхозниксене ĕçшĕн тÿлемелли халиччен пулнă йĕрке тăрах, хуçалăх çулĕнче ĕçлесе тунă тупăшсене колхозсенче валеçнĕ чухне ĕçлесе тунă ĕçĕн пахалăхне, бригада е звено туса илнĕ тырпул тухăçне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне хăпартнине шута илмеççĕ.

Колхозсенче, ĕç результачĕсен пахалăхне шута илмесĕр ĕçшĕн тÿленĕ чухне, тĕштырăпа техникăллă культурăсене тата ытти ялхуçалăх культурисене пысăк тухăçпа туса илекен, малта пыракан, тÿрĕ кăмăлпа ĕçлекен колхозниксем, çавăн пекех тата выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне нумай ÿстернĕ колхозниксем, начар ĕçлекен тата тырпул сахал туса илекен колхозниксемпе танлаштарсан, лайăх мар условинче тăрса юлаççĕ.

Уйхир ĕçĕсене вăхăтра тата пысăк пахалăхпа пурнăçа кĕртекен, çапла майпа пысăк тухăçлă тырпул туса илекен бригадăсемпе звеносенчи колхозниксем, çав колхозри, уйхирсене ĕçлесе хатĕрлеме нумай ĕç хунă пулин те сахал тырпул туса илекен бригадăсемпе звеносенчи колхозниксемпе танлаштарсан, ĕçшĕн час-часах пĕр пек е тата сахалрах илеççĕ. Кая çолакан бригадăсемпе звеносем сахал тырпул туса илни вара уйхир ĕçĕсене начар тата вăраха ярса туса пынинчен килет.

Винница облаçĕнчи Комсомольский районри «Вторая Пятилетка» колхозра С. Войтюк звени 2,5 гектар çинчен сахăр кăшманĕ гектар пуçне 136-шар центнер пухса илнĕ, вăл ĕçе тума 370 ĕçкунĕ хунă. А. Скрыпник звени вара çаван чухлĕ çĕр çинчех гектар пуçне 211,5-шер центнер пухса илнĕ, вăл ĕçе тума 350 ĕçкунĕ хунă. Ĕçкунĕшĕн пĕрпек тÿленине пула, А. Скрыпник звени, 56 процент чухлĕ ытларах тухăç панăскер, ĕçкунĕ çине укçа, тĕштырă тата ытти продуктсене Войтюк звенинчен сахалтарах илет.

Чернигов облаçĕнчи Лосиновский районри Фрунзе ячĕпе тăракан колхозра Е. Зоценко колхозница звенине, 1940 çулта 0,20 гектар çĕр çинчен 7 центнер махорка туса илнĕскерне, 39 ĕçкунĕ шутласа панă, У. Карнаух колхозница звенине вара çаван чухлĕ çĕр çинчех 1,43 центнер махорка туса илнĕшĕн 40 ĕçкунĕ шутласа панă. Ĕçкунĕшĕн пĕрпек тÿленине пула, Е. Зоценко звени, 5 хута яхăн ытларах махорка туса илнĕскер, ĕçкунĕ çине тĕштырăпа ытти продуктсене У. Карнаух звенинчен сахалтарах илет.

Çакăн пек фактсем выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекен колхозниксене ĕçшĕн тÿленĕ çĕрте те пур.

Малта пыракан колхозниксене ĕçшĕн тÿлес çĕрти çак тĕрĕсмарлăх акă мĕншĕн пулма пултарнă: ĕçшĕн тÿленĕ чухне ĕçлесе тунă ĕçкунĕсен хисепне кăна шута илеççĕ, ĕçĕн пахалăхне шута илмеççĕ, ĕçĕн юлашки результатне — ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне шута илмеççĕ.

Колхозсенче ĕçшĕн çакăн пек уравниловка йĕркипе тÿлени колхозниксене малта пыракан практикăпа, агротехника тата зоотехника наукин çитĕнĕвĕсемпе усă курма, мĕнпур ялхуçалăх культурисене пысăк тухăçлăн туса илме тата выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ÿстерме хавхалантармасть.

Колхозниксене ĕçшĕн уравниловка йĕркипе (бригада е звено туса илнĕ тырпул тухăçлăхне шута илмесĕр) тÿлени колхозсенче ĕç тухăçлăхне малалла ÿстерсе пырас тата тырпул тухăçлăхĕпе выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ÿстерес тĕлĕшпе колхозниксем патернальнă интереслисене ĕçлессине хăпартас ĕçре пысăк чăрмав пулса тăрать.

Çакна пула, колхозсенчи мĕнпур ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне хăпартмалли тата выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ÿстермелли пысăк майсемпе çителĕкĕсĕр усă куракçĕ.

СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б): колхозсенче ĕçлесе тунă ĕçкунĕсем тăрах тÿлессипе пĕрле, УССР колхозсĕсенче ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ÿстернĕшĕн колхозниксене хушса тÿлес йĕрке тума кирлĕ, тесе шутлаççĕ.

Çакăн пек йĕрке тусан, малта пыракан колхозниксене ĕçшĕн тÿлес çĕрте колхозсенче халиччен пулнă тĕрĕсмарлăх пĕтет, мĕншĕн тесен ун пек тусан, ĕçлесе тунă ĕçкунĕсен хисепне шута илнипе пĕрлех, ĕçĕн пахалăхне шута илеççĕ, ялхуçалăх культурисен тухăçлăхĕ тата выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхĕ мĕнле пулнине те шута илеççĕ.

Ĕçшĕн çаваn пек тÿлемелле туни колхозсенче ĕç тухăçлăхне хăпартма çĕнĕ стимулсем туса парать, ялхуçалăхĕн пур отраслисенче те продукци хисепне нумайлатассишĕн колхозник сем материальнă интереслисе ĕçлессине ÿстерет, çакă вара государствăн, колхозăн тата колхозниксен интересĕсене тĕрĕссĕн сыхăнтарса пырать.

Тырпул тухăçлăхне пур майсемпе те хăпартса пырас тата выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ÿстерес шутпа, колхозниксемпе Совет Союзĕнчи пĕтĕм ĕçсыннисен ÿснĕçемĕн ÿссе пыракан потребноçсене тивĕçтерме ялхуçалăкĕн мĕнпур продуктисене туса хатĕрлессине малалла та вăйлатса пырас шутпа, ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) çапла йышăнаççĕ:

1. Колхозсене, 1941 çултан пуçласа, бригадăсемпе звеносем планран ирттерсе туса илнĕ тĕштырăсен, техникăллă, пахча-çимĕç тата выльăх апачĕлĕх акнă культурăсен пĕр пайне, çаван пекех планпа панă заданирен ирттерсе суса илнĕ сĕтĕн пĕр пайне, выльăхсене пăхса ÿстерес, самăртас, выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне хăпартас ĕçри ытти показателĕсем тăрах та планпа пăхнинчен ытлашши туса илнĕ продукцин пĕр пайне бригадăсемпе звеносенчи колхозниксене малтан пăхса хунă ĕçкунĕсем çумне хушса натурăпа е тата укçан пама сĕнес.

2. Сахăр кăшманĕ лартса тăвас, çĕрмамăкĕ тата ытти техникăллă культурăсем туса илес çĕрте звеносен ĕçĕнчи паха опытсене шута илсе, колхозсене пур çĕрте те производствăллă бригадăсенчи звеносем организацилеме, вĕсем çумне техникăллă культурăсене, пахча-çимĕç, çĕрулми, вир, кукуруза тата вĕсене пăхса ÿстерес çĕрте ал вĕçĕн ытларах ĕçлеме тивекен сайран лартса тăвакан ытти культурăсене туса илме кирлĕ çĕр лаптăкĕ çирĕплетсе пама сĕнес.

Тĕштырă тата çавнашкал ытти культурăсене, вĕсене акса тăвас ĕçе пĕтĕмпе тенĕ пекех пысăккăн механизацилеnĕ тата вăл ĕçсене МТС машинисемпе е бригадăн инвентарĕпе тата чĕрĕ туртăм вăйăпе тунă пирки, çĕре сухаласа хатĕрлес тата акас ĕçсене ытларах тракторсемпе тунă пирки, çав культурăсене пăхса ÿстерме ĕç вăйĕ сахал кирлĕ пулнине кура, пĕтĕмĕшпе илсен вĕсене комбайнсемпе пухса кĕртнĕ пирки, комбайнсемпе тĕрĕс усă курас тесен анлăнрах лаптăксем кирлĕ пулнине тата ахаль йышши машинăсемпе пухса кĕртнĕ чухне авăн çапнă çĕрте ĕçлеме колхозниксем йышлăн кирлĕ пулнине шута илсе, — вăл культурăсене акса тумалли çĕре тÿрех пĕтĕм бригада çумне çирĕплетсе параççĕ.

3. Тырпул тухăçлăхне ÿстерес плана ирттерсе тултарнăшăн колхозниксене çакăн чухлĕ хушса тÿлемелле тăвас:

Тĕштырă культурисем тăрах уйхир ĕçĕн бригадиничи колхозниксем, бригада çумне çирĕплетсе панă пĕтĕм çĕр лаптăкĕ çинче тĕштырă культурисен тухăçлăхне планран ирттерсе ÿстернĕ пулсан, бригада планпа пăхнинчен ытларах пухса кĕртнĕ тырăн тăвăттăмĕш пайне илеççĕ.

Пĕр йышши е темиçе йышши тĕштырă культурисем тăрах тырпул тухăçлăхне планран ирттерсе ÿстернĕ бригадăри колхозниксене, бригада çумне çирĕплетсе панă пĕтĕм çĕр лаптăкĕ çине акнă тĕштырă культурисен тухăçлăхне ÿстермелли плана тултарсан çеç хушса тÿлеççĕ.

Звеносенчи колхозниксем звено çумне çирĕплетсе панă çĕр лаптăкĕ çине акнă вир тата кукуруза тухăçлăхне планран ирттерсе ÿстернĕ пулсан, звеносем валли планпа пăхнинчен ытларах пухса кĕртнĕ çав тырăн тăвăттăмĕш пайне илеççĕ.

Хĕвелçавăрнăш, соя, рапс тата йĕтĕн-кудряш тăрах. Акмалли çĕр лаптăкĕ çинче хĕвелçавăрнăш, соя тухăçлăхне планпа пăхнинчен ирттерсе ÿстернĕ звеносенчи колхозниксем, тата бригадăсем çумне çирĕплетсе панă çĕр лаптăкĕ çинче рапс тата йĕтĕн-кудряш тухăçлăхне планпа пăхнинчен ирттерсе ÿстернĕ уйхир ĕç бригадисенчи колхозниксем, звенопа бригадăсем планпа пăхнинчен ирттерсе пухса кĕртнĕ çав культурăсен вăррин виççĕмĕш пайне илеççĕ.

Клещевина тăрах. Звено çумне çирĕплетсе панă акмалли çĕр лаптăкĕ çинче клещевина тухăçлăхне планпа пăхнинчен ирттерсе ÿстернĕ звенори колхозниксене звено планран ирттерсе туса илсе государствăна панă клещевина вăрлăхĕшĕн колхоза государство паракан тĕштырăн çуррине натурăпа памалла.

Сахăр кăшманĕ тăрах. Звеносенчи колхозниксене çав звено çумне çирĕплетсе панă акмалли çĕр лаптăкĕ çинче планран ирттерсе туса илнĕ кашни центнер сахăр кăшманĕшĕн, пĕр центнер сахăр кăшманĕ колхозра ларакан вăтам хакран (завод тÿлекен хакпа) 50 процентне укçан хушса тÿлеççĕ, кăшман панăшăн илнĕ укçа та тата сахăр заводне сахăр кăшманĕ парас плана ытлашшипех тултарнăшăн колхоза паракан премни-надбавка та çав шутах кĕрет.

Çĕрмамăк тăрах. Звеносенчи колхозниксене, çав звено çумне çирĕплетсе панă акмалли çĕр лаптăкĕ çинче планран ирттерсе туса илнĕ кашни центнер çĕрмамăкĕшĕн колхозра вăтам шутпа ларакан пĕр центнер çĕрмамăк хакĕнчен (заготхлопкопункт тÿлекен хакпа) 50 процентне укçан хушса тÿлеççĕ, çĕрмамăкĕ панăшăн илнĕ укçа та тата контрактаци планне ытлашшипех тултарнăшăн колхоза паракан преми-надбавка та çав шутах кĕрет.

Йĕтĕн-долгунец, средне-русский тата кантăрти кантăр тăрах. Звено çумне çирĕплетсе панă акмалли çĕр лаптăкĕ çинче йĕтĕн-долгунец е средне-русский тата кантăрти кантăрсен тухăçлăхне планран ирттерсе ÿстернĕ звеносенчи колхозниксем кашни звено планран ытлашши пухса кĕртнĕ сÿсĕн тата кантăрвăррин виççĕмĕш пайне илеççĕ.

Вăрлăх акса тăвакан колхозсенчи звеносенче ĕçлекен колхозниксем, звеносем çумне çирĕплетсе панă акмалли çĕр лаптăкĕ çинче йĕтĕн-долгунец е кантăр вăрлăхĕн тухăçлăхне планран ирттерсе ÿстернĕ пулсан, государствăна планран ирттерсе вăрлăх тăратнăшăн колхоза панă укçан виççĕмĕш пайне илеççĕ.

Çĕрулми тата пахча-çимĕç культурисем тăрах. Звеносенчи колхозниксем, çав звеносем çумне çирĕплетсе панă пĕтĕм акмалли çĕр лаптăкĕ çинче çĕрулми тата пахча-çимĕç культурисен—купăста, помидор, хăяр, хĕрлĕ кăшман, кишĕр тата сухан тухăçлăхне планран ирттерсе ÿстернĕ пулсан, планпа пăхнинчен ытлашши пухса илнĕ çĕрулмин тата çÿлте асăннă пахча-çимĕç культурисен пиллĕкмĕш пайне илеççĕ.

Выльăх апачĕлĕх акнă культурăсем тăрах. Бригадăсенчи колхозниксем, çав бригадăсем çумне çирĕплетсе панă çĕр лаптăкĕ çинче нумай çуллăха тата пĕр çуллăха акнă куракансен, çаран утин, выльăх кăшманĕн тухăçлăхне планран ирттерсе ÿстернĕ пулсан, бригада валли планпа пăхнинчен ытларах пухса кĕртнĕ культурăсен виççĕмĕш пайне илеççĕ.

Бригадăсене çирĕплетсе панă çĕр лаптăкĕ çинче планран ирттерсе туса илсе государствăна госзакупка шучĕпе панă клевер, люцерна, эспарцет вăрлăхĕсен кашни центнерĕшĕн пĕр центнер вăрлăх колхозра ларакан вăтам хакпа шутласа, виççĕмĕш пайне тÿлемелле, вăрлăх панăшăн илнĕ укçа та тата преми-надбавка та çав шутах кĕрет, çавăн пекех тата колхоз çав вăрлăхсемшĕн заготовительсенчен илнĕ тырăн виççĕмĕш пайне памалла.

4. Выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекен колхозниксене, сĕт суса илес, çамрăк выльăхсене пăхса çитĕнтерес, вĕсене самăртас, çăм касса илес, выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне хăпартас тĕлĕшпи ытти показательсем тăрăх та планпа панă заданисене ирттерсе тултарнăшăн çакăн чухлĕ хушса тÿлемелле тăвас:

Майракаллă шултра выльăхсен фермисенче

Доярка-выльăх пăхакана, ун çумне çирĕплетсе панă ĕнесенчен планпа пăхнинчен ирттерсе сĕт суса илсен, ăна планпа пăхнинчен пăхнăран суса илнĕ сĕтрен 15 процентне памалла.

Выльăх пăхакана-кĕтÿçе — вăл пăхакан ĕнесенчен пуринчен те планран ирттерсе сĕт суса илнĕшĕн, ăна планран ытларах суса илнĕ сĕтрен 5 процентне памалла.

Доярка-выльăх пăхакана — çулталăк пуçламĕшĕнче хăйне çирĕплетсе панă мĕнпур ĕнесемпе пушмак пăрусенчен пăрусем илнĕшĕн тата вĕсене пăру пăхакана пайăччен 15—20 кун хушши сыхласа ÿстернĕшĕн 75 литр сĕт памалла.

Доярка-выльăх пăхакана — ун çумне çирĕплетсе панă ĕнесемпе пушмак пăрусенчен илнĕ пăрусене пурне те 6 уйăха çитиччен сыхласа ÿстернĕшĕн тата вĕсем вăтам шутпа талăкра чĕрĕ виçепе хутшăнса пымалли плана ытлашшипех тултарнăшăн пăру пуçне планпа пăхнинчен ытларах хутшăннă кашни 10 килограммшăн 5-шер литр сĕт памалла.

Пăру пăхакана — ун çумне çирĕплетсе панă пăрусене пурне те 6 уйăха çитиччен сыхласа тата пăхса ÿстернĕшĕн, ăна çирĕплетсе панă 20—25 пăрувăн вăтам шутпа талăкра чĕрĕ виçепе хутшăнса пымалли плана ытлашшипех тултарнăшăн пăру пуçне планпа пăхнинчен ытларах хутшăннă кашни 10 килограммшăн (чĕрĕ виçепе шутласа) 0,5-шер килограмм аш-какай памалла.

Пăрусене 6 уйăхран пуçласа пĕр çулталăк тултиччен пăхакан **скотнике—**пăрусене пурне те сыхласа ÿстернĕшĕн тата вĕсем вăтам шутпа талăкра чĕрĕ виçепе хутшăнса пымалли плана ытлашшипех тултарнăшăн пăру пуçне планпа пăхнинчен ытларах хутшăннă кашни 100 килограммшăн 4 килограмм аш-какай памалла.

Икĕ бригадăран тăракан ферма заведующине — ферма çав показательсем тăрăхах плана ирттерсе тултарнăшăн планпа пăхнинчен ытларах суса илнĕ сĕтрен 2 процентне памалла.

4. Выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекен колхозниксене, сĕт суса илес, çамрăк выльăхсене пăхса çитĕнтерес, вĕсене самăртас, çăм касса илес, выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне хăпартас тĕлĕшпи ытти показательсем тăрăх та планпа панă заданисене ирттерсе тултарнăшăн çакăн чухлĕ хушса тÿлемелле тăвас:

Сысна фермисенче

Сысна пăхакансене — ун çумне çирĕплетсе панă сысна аминчен илнĕ çăвăрсене 2 уйăха çитиччен пăхса çитĕнтермелли плана ирттерсе тултарнăшăн, планпа пăхнинчен ытлашши пăхса çитĕнтернĕ кашни пиллĕкмĕш çăвăрăн 2 уйăха çитнĕ пĕр çăвăр памалла.

Сысна ĕрчетес енĕпе ĕçлекен бригадăсенчи колхозниксене — сыснасене самăртмалли тата вăтамран чĕрĕ виçепе хутшăнмалли плана ирттерсе тултарнăшăн пĕтĕм самăртнă сысна-сем планпа пăхнинчен ытлашши хутшăннă кашни 100 килограммшăн (чĕрĕ виçепе шутласа) 15 килограмм аш-какай памалла.

Бригадира е ферма заведующине — сыснасене самăртас плана, çавăн пекех сысна çурисене пăхса ÿстерес плана пĕтĕм фермăпа ирттерсе тултарнăшăн пĕтĕм самăртнă сысна-сем планпа пăхнинчен (чĕрĕ виçепе шутласа) ытлашши хутшăннă кашни 100 килограммшăн 4 килограмм аш-какай памалла.

Кунсăр пуçне бригадира е ферма заведующине, вĕсем çумне çăвăрсене пăхса ÿстерме сысна **амисем,** çавăн пекех самăртма сысна**сем** çирĕплетсе панă пулсан, вĕсем хăйсем çумне çирĕплетсе панă сысна**сем** тĕлĕпше çав плансене ирттерсе тултарсан, вĕсене сысна ĕрчетес тĕлĕпше ĕçлекен бригадăсенчи колхозниксем валли тунă условисемпех хушса тÿлеççĕ.

Сурăх фермисенче

Сурăх ĕрчетекен бригадăсенчи чабансене — çирĕплетсе панă сурăх кĕтĕвĕнчен планран ирттерсе çăм касса илнĕшĕн, колхоз правленийĕ пăхнă тăрăх, планран ирттерсе илнĕ çăмăн 10 процентне натурăпа е вăл çăм хакне укçан памалла.

Путексем пăхса ÿстермелли плана ирттерсе тултарнăшăн чабансене планран ирттерсе пăхса ÿстернĕ кашни 3 путекшĕн 1 смушка (путек тирĕ) хакне укçан е пĕр сурăх тирне натурăпа памалла; пăхса ÿстернĕ путексене шута илнĕ чухне смушка валли (план тăрăх) пуснă путексене те шута илес пулать.

Сурăх фермин заведующине, фермăра икĕ е ытларах бригада пулсан, путек пăхса ÿстерес плана тултарнипе пĕрлех çăм касса илмелли плана ирттерсе тултарнăшăн, колхоз правленийĕ пăхнă тăрăх, пĕтĕм фермипе планран ирттерсе касса илнĕ çăмăн 2 процентне натурăпа е вăл çăмăн хакне укçан памалла.

Кайăк-кĕшĕн ĕрчетекен бригадăна — бригада кайăк-кĕшĕкĕсене, вĕсем кайăк-кĕшĕкрен çăмарта илмелли плана ирттерсе тултарнă пулсан, планран ирттерсе илнĕ çăмартасен 15 процентне, тата бригада çумне çирĕплетнĕ кайăк-кĕшĕке ĕрчетмелли плана ирттерсе пăхса ÿстернĕ кайăк-кĕшĕк чĕпписен çуррине памалла.

Утарçăсене — ăвăс илмелли тата пылхурчĕн семьисене ÿстермелли плана тултарнипе пĕрлех пыл пухмалли плана ирттерсе тултарнăшăн, планран ирттерсе илнĕ пылăн 15 процентне памалла.

Кролик ĕрчетекен фермăсенчи колхозниксене —кролик çурисене 6 уйăха çитиччен пăхса ÿстермелли плана ирттерсе тултарнăшăн, планран ирттерсе пăхса ÿстернĕ кролик çурисен 25 процентне памалла;

кролик тирĕсене пĕрремĕш сортпа сутмалли плана ирттерсе тултарнăшăн — планран ирттерсе пĕрремĕш сортпа панă тирсен хакĕн 15 процентне укçан памалла;

ангорски кроликсен мамăкне сутмалли плана ирттерсе тултарнăшăн — планран ирттерсе панă мамăк хакĕн 25 процентне памалла.

5. УССР колхозĕсем тăрах ялхуçалăх культурисен вăтам тухăçлăхĕн 1941 çулти планне, вĕсен çирĕплетсе панă тухăçлăхне ирттерсе ÿстернĕшĕн хушса тÿлемелле туса, çакăн пек çирĕплетес:

Мĕнпур тĕштырă культурисем — гектартан 14 центнер

Вăл шутран:

кĕрхи тулă	—	»	15,2 »
кĕрхи ыраш	—	»	13,2 »
çурхи тулă	—	»	9,5 »
урпа	—	»	14,0 »
сĕлĕ	—	»	13,0 »
вир	—	»	15,0 »
хуратул	—	»	7,8 »
кукуруза	—	»	20,0 »
сорго	—	»	10,8 »
рис	—	»	39,0 »
хутаçлă тĕштырăсем	—	»	12,0 »
вăрлăхлăх вика	—	»	12,0 »
Сахăр кăшманĕ	—	»	202,0 »
Çĕрмамăк-сырец	—	»	5,8 »
Йĕтĕн-долгунец сÿсĕ	—	»	4,2 »
Йĕтĕн-долгунец вăрри	—	»	3,9 »
Средне-русский кантăр сÿсĕ	—	»	5,4 »
Средне-русский кантăр вăрри	—	»	4,5 »
Кантăрти кантăр сÿсĕ	—	»	7,0 »
Кантăрти кантăр вăрри	—	»	3,2 »
Хĕвелаçавăрăнăш	—	»	12,5 »
Кĕрхи рапс	—	»	10,0 »
Соя	—	»	8,0 »
Йĕтĕн-кудряш	—	»	7,0 »
Клещевина	—	»	7,0 »
Çĕрулми	—	»	120,0 »

(Юлашки 2-мĕш страницăра).

Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕхсен продуктивлăхне ӳстернĕшĕн Украина ССР Республикинчи колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă постановлени

ЮЛАШКИ

УССР колхозĕсем тăрăх пахча-çимĕçсен тата выльăх апачĕ валли акнă культурăсен вăтам тăхăçлăхĕн 1941 çулти заданийĕсене, вĕсене ирттерсе тултарнăшăн колхозниксене хушса тӳлемелле туса, çакăн пек çирĕплетес:

Пахча-çимĕç культурисем:

ир пулакан купăста	—гектартан	142,0 цент.
вăтам вăхăтра пулакан купăста	— »	162,0 »
кая юлса пулакан купăста	— »	200,0 »
помидорсем	— »	180,0 »
хăярсем	— «	129,0 «
хĕрлĕ кăшман	— «	176,0 »
кивĕр	— »	139,0 »
сухан	— »	120,0 »
Нумай çул ӳсекен вăрлăхлăх акнă культурăсем:		
клевер	— »	1,4 »
люцерна	— »	1,6 »
эспарцет	— «	5,9 »
Нумай çул ӳсекен утлăх акнă культурăсем	— »	26,0 »
Пĕр çул ӳсекен утлăх акнă культурăсем	— »	24,0 »
Акмасăр ӳсекен çарансен ути	— »	22,0 »
Выльăх кăшманĕ	— »	250 »
Выльăх кишĕрĕ	— »	150 »
Выльăх апачĕлĕх акнă бахча культурисем	— »	350 »

6. УССР колхозĕсем тăрăх выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри вăтам продуктивлăхăн 1941 çулти заданийĕсене, вĕсене ирттерсе тултарнăшăн колхозниксене хушса тӳлемелле туса, çакăн пек çирĕплетес:

Колхозри тăрантаракан кашни ĕне пуçне сĕт суса илмелле	— 1.530 литр.
Çулталăк пуçламĕшĕ тĕлне пулнă кашни 100 пуç ĕнепе пушмак пăрусенчен çакăн чухлĕ пăру пăхса ӳстермелле	— 90 пуç.

Пăрусем тата майракаллă шултра çамрăк выльăхсем талăкне вăтам шутпа çакăн чухлĕ хутшăнса пымалла:

(грамсемпе)

ВЫЛЬĂХСЕН РАЧĔСЕМ	6 уйăха çити	6 уйăхран 1 çула çитиччен	1 çултан ӳсе çула çитиччен
Симментальски, швицки, ольденбургски ратсем	550	450	350
Симментальски ратпа ольденбургски рат метисĕсем тата сероукраински рат	500	400	330
Краснонемецки, белоголово-колонистски ратсем	470	380	310
Краснонемецки, белоголово-колонистски ратсен метисĕсем тата вырăнти выльăх	460	370	300

Колхозра çулталăк пуçланнă тĕле пулнă 9 уйăхран иртнĕ кашни сысна ами пуçне пăхса ӳстермелле — 13 çура

100 гектар çĕр лаптăкĕ пуçне (акмалли çĕр, вăл шутрах садсемпе пахчасем, улăхсемпе выльăх çӳремелли вырăнсем) 6 сысна пăхса ӳстермелле, кашни 1 сыснан вăтам виçи çапла пулмалла. — 90 килогр.

Колхозра çулталăк пуçламĕшĕ тĕлне пулнă кашни 1 сурăх пуçне çакăн чухлĕ çăм илмелле — 2,7 килогр.

Çулталăк пуçламĕшĕ тĕлне пулнă кашни 100 сурăхпа 1 çул тултарнă çурхи путек пуçне çакăн чухлĕ путек пăхса ӳстермелле — 121 пуç.

Çăмарта тăвакан кашни хайăк-кĕшĕкрен çакăн чухлĕ çăмарта илмелле:

чăхран	90 штук
кăвакалтан	50 штук
кăркка аминчен	35 штук

Кайăк-кĕшĕк чĕпписене 6 уйăха çити пăхса ӳстермелле:

чăх чĕпписемпе кăвакал чĕпписене	85 проц.
кăркка чĕпписене	75 проц.

Çулталăк пуçламĕшĕнче пулнă кашни хурами пуçне 6 уйăха çитиччен çакăн чухлĕ хур чĕппи пăхса ӳстермелле — 5 штук

Çулталăк пуçламĕшĕнче пулнă кашни пĕр семье пылхурчĕ пуçне çулталăкра пурĕ çакăн чухлĕ пыл пухса илмелле — 30 килогр.

вăл шутра таварлăх пыл — 10 килогр.

Çулталăкне кашни çемье пуçне пурĕ çакăн чухлĕ ăвăс илмелле — 0,8 килогр.

Çулталăк пуçламĕшĕ тĕлне пулнă кашни ама кролик пуçне 6 уйăха çитиччен çакăн чухлĕ кролик çури пăхса ӳстермелле — 12 штук

Çулталăк пуçламĕшĕнче пулнă ангорски ратлă кашни ама кроликран (çурисемпе пĕрле шутласан) çакăн чухлĕ мамăк илмелле — 500 грамм

Государствăна панă пĕтĕм тирсенчен пĕрремĕш сортлă тирсем çакăн чухлĕ пулмалла. — 40 проц.

7. УССР Совнаркомне тата КП(б)У Центральный Комитетне — çак постановлени тăрăх облаçсемпе районсем валли ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне мĕнле пулмаллине тата выльăх-чĕрлех ĕрчетес ĕçри продуктивлăхăн планлă заданийĕсене 1941 çулти январĕн 25-мĕшĕнчен кая юлмасăр палăртса пама хушас, райсоветсен исполкомĕсемпе КП(б)У райкомĕсене—колхозсем тăрăх мĕнле пулмаллине 1941 çулти февралĕн 10-мĕшĕнчен кая юлмасăр палăртса пама хушас.

Бригадăсем, звеносем тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекен бригадăсем валли тырă тухăçлăхĕпе выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхĕн планне малтан колхоз правленийĕ, обязательнă агрономпа тата зоотехникпа пĕрле хатĕрлет, çакăн хыççăн ăна колхоз членĕсен пĕрлехи пухăвĕ сӳтсе-явать тата çирĕплетет.

8. Пысăк тухăçлă тырпул илессипе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре пысăк продуктивлăх илессине, ялхуçалăхĕн мĕнпур ĕçĕсене, уйрăмăнах ялхуçалăх çулĕн татса паракан тапхăрĕсенчи, тырпула акнă, пăхса ӳстернĕ тата пухса кĕртнĕ вăхăтри ĕçсене вăхăтра туса ирттерессине питех те пысăк вырăна хурса, тата ĕç дисциплинине малалла хăпартса пырас тĕллĕпе колхозсене çапла тума сĕнес: тырпул тухăçлăхĕпе выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхĕн планĕсене ирттерсе тултарнăшăн колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлемелле, анчах та вăл колхозник мартăн 1-мĕшпе ноябрĕн 10-мĕш хушшинче колхоз производствинче çакăн чухлĕ ĕç кунĕнчен кая мар ĕçлемелле;

сахăр кăшманĕ, йĕтĕн, кантăр тата çĕрмамăк акакан колхозсенче — 120 ĕçкунĕнчен кая мар;

ытти колхозсенче — 100 ĕç кунĕнчен кая мар.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕллĕпе ĕçлекен бригадăсенче хушса памалли тӳлева колхозра çулталăкне 220 ĕç кунĕнчен кая мар ĕçленĕ колхозниксене памалла.

Сахăр кăшманĕ, йĕтĕн, кантăр тата çĕрмамăк акса тăвакан колхозсенче мартăн 1-мĕшпе ноябрĕн 10-мĕш хушшинче 120 ĕç кунĕнчен каярах, анчах 90 кунран нумайрах ĕçленĕ колхозниксене, ытти колхозсенче çав вăхăт хушшинчех 100 ĕç кунĕнчен каярах, анчах 75 кунран нумайрах ĕçленĕ колхозниксене тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕллĕпе ĕçлекен бригадăсенчи колхозниксене, çулталăк хушшинче 220 ĕç кунĕнчен каярах, анчах 170 кунран нумайрах ĕçленĕ колхозниксене тырпул тухăçлăхĕпе выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхĕн планĕсене ирттерсе тултарнăшăн хушса памалли тӳлевĕн çуррине параççĕ.

9. Палăртса çирĕплетнĕ ĕç кунĕсене ĕçлесе тултарман чухне — ача сурат-чине кура отпускра пулнă колхозницăсем, çар ĕçне вĕренмелли сборсенче пулнă, Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕн речĕсене илнĕ колхозниксем, тата планлă йĕртсене колхозран промышленноçа, транспорта тата халăх хуçалăхĕн ытти отраçлисене, çавăн пекех вĕренме кайнă çынсем, ертсе пыракан ĕçе çулталăк заданийĕсене ирттерсе тултарнăшăн çын-вĕсен çителĕксĕр ĕç кунĕсен хисепĕ çӳлте кăтартнă сăлтавсем пирки çав ĕçсенче пулнă вăхăтпа танлаштать пулсан, тырпул тухăçлăхĕпе выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхĕпе ирттерсе тултарнăшăн хушса паракан тӳлеве илме пултараççĕ.

10. Çакăн пек тăвас: плансене ирттерсе тултарнăшăн колхозниксене хушса памалли тӳлеве çапла валеççе параççĕ:

а) звенора — звенори кашни колхозник звено çумне çирĕплетнĕ çар культура тĕлĕппе ĕçлесе тунă ĕçкунĕсен хисепĕ тăрăх;

б) бригадăра — колхозниксем тӳрĕмех бригада çумне çирĕплетнĕ тырă культурисемпе ытти çавăн пек культурăсем тĕлĕппе ĕçлесе тунă ĕçкунĕсен хисепĕ тăрăх (звенори колхозниксем звеносем çумне çирĕплетнĕ культурăсем тĕлĕппе ĕçлесе тунă ĕçкунĕсене звено тăрăх кăна путь илеççĕ);

в) сурăх, кайăк-кĕшĕк, кролик фермисемпе утарсенче — тивĕçлĕ ферма çинче ĕçлесе тунă ĕçкунĕсем тăрăх.

11. Уйăхр бригадин бригадирне тӳрĕмех бригада çумне çирĕплетнĕ ĕçштырă культурисем тата çавăн пек ытти культурăсем тăрăх тырă тухăçлăхĕн планне ирттерсе тултарнăшăн—çав бригадăри колхозниксене хушса паракан вăтам тӳлевĕрен пĕрре çурă кут ӳстерсе тӳлеççĕ.

Кунсăр пуçне, звеносем техникăллă культурăсемпе сайран лартса тăвакан ытти культурăсен планне ирттерсе тултарнăшăн та бригадирсене хушса тӳлемелле тăвас.

Бригада составне кĕрекен пур звеносем те тырпул тухăçлăхĕн планне ирттерсе тултарассишĕн бригадир тӳрĕмех интересленсе ĕçлемелле тăвас шутпа, çапла тăвас: звеносем çумне çирĕплетнĕ культурăсем тăрăх хушса паракан тӳлеве бригадир, уйрăм культурăсем тăрăх тата вăл культурăсем тăрăх звеносен хисепĕнчен çурринчен кая мар хăйсене çирĕплетсе панă тухăçлăх планне ирттерсе тултарнă пулсан, тин илет;

бригадира хушса паракан тӳлеве çапла шутласа памалла: тухăçлăх планне ирттерсе тултарнă звеносенчи колхозниксене хушса паракан тӳлевĕн пĕтĕм суммине — техникăллă культурăсемпе сайран лартса тăвакан ытти культурăсен лаптăкĕсене çирĕплетсе панă бригадăри пĕтĕм звеносенчи колхозниксен хисепĕ çине пайласçĕ, пайланă хыççăн тухакан вăтам сумма — бригадира хушса памалли тӳлев пулать.

12. Колхоз ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстермелли плана ирттерсе тултарнăшăн колхоз председательне хушса ĕçкунĕсем çакăн чухлĕ шутласа памалла тата укçан çакăн чухлĕ хушса тӳлемелле тăвас:

Тырпулсен тухăçне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстермелли плана ирттерсе тултарнăшăн	Плана ирттерсе тултарнăн хисепĕ	Кашни уйăхра ĕçкунĕсемпе тата укçан тӳлемелле туни çумне хушса çакăн чухлĕ процент шутласа параççĕ
Вăтамран пĕтĕм тĕштырăсен культурисем тăрăх	10 проц. таран	15 проц.
	11—25 проц.	25 проц.
	25 проц. ытларах	40 проц.
Мĕнпур техникăллă тата пахча-çимĕç культурисем тăрăх (ятарласа йышăннă постановленисем тата договорсем тăрăх преми пама пăхман культурăсене кĕртмесĕр)	10 проц. таран	15 проц.
	11—25 проц.	25 проц.
	25 проц. ытларах	40 проц.
Ихĕ ферма е унтан ытларах тытакансене	10 проц. таран	15 проц.
	11—25 проц.	25 проц.
	25 проц. ытларах	40 проц.

13. Çакăн пек тăвас: колхоз тăрăх ялхуçалăх культурисен тухăçне ӳстермелли плана ирттерсе тултарнăшăн колхозри полевода тата агротехника хушса тӳлемелли вирĕне çак çитĕнӳсеммĕн колхоз председательне тӳлемелле туниничен 70 процент чухлĕ тăвас.

14. Тырпул тухăçне ӳстермелли плана тата выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстермелли заданисене ирттерсе тултарнăшăн колхозниксене натурăпа е укçан хушса тӳлессине колхоз ялхуçалăх продуктисен поставкисем тĕлĕппе государство умĕнчи обязательствăсене тултарнă хыççăн, вăрлăх, фураж, страховой тата колхозсенчи ытти общественăллă фондсене туса çитернĕ хыççăн тата колхозри тупăшсене валеççе тухнă вăхăтра туса ирттермелле.

Натурăпа сĕт, пахча-çимĕççем тата ытти продукци парассине, вĕсем нумай вăхăта сыхланса усранма пултарайманнине шута илсе, çулталăк хушшинче аванс йĕркипе, колхоз правленийĕ туса палăртнă сроксенче тата государство умĕнчи обязательствăсене мĕнле тултарса пынине кура туса пымалла.

15. Ĕçе звено системипе организацилессине техникăллă культурăсем, пахча-çимĕççем, çĕрулми, вир, кукуруза тата сайран лартса тăвакан ытти культурăсем туса илес енĕпе ĕçлекен производствăллă бригадăсенче пуринче те пурнăçа кĕртессине шута илсе, çав культурăсене туса илес тĕллĕпе вăй ытларах хумаллине тата вĕсем ал ĕçне ытларах ыйтнине, вăл культурăсене ĕçлемелли сроксемпе вĕсене пухса кĕмелли сроксене шута илсе, çавăн пекех тата сахăр кăшманĕ, йĕтĕн, кантăр, çĕрмамăк тата техникăллă ытти культурăсем туса илес енĕпе ĕçлекен звеносене сыхласа хăварас шутпа, çапла тăвас: звеносене организацилене чухне тата вĕсем çумне çӳлте кăтартнă культурăсене çирĕплетнĕ чухне кашни звено çумне, правило пекех, 2—3 культурăран ытла мар тата пĕр çул хушши срокран кая мар çирĕплетмелле.

Звеньевой звенори ытти колхозниксемпе пĕртанах ĕçленине тата унпа пĕрлех вăл звенона ертсе пынине шута илсе, колхозсене звенона ертсе пынăшăн звеньевоя кашни уйăхрах звенори мĕнпур çынсем ĕçлесе илнĕ пĕтĕм ĕçкунĕсен хисепĕнчен 2—3 процент шутласа пама сĕнес.

16. СССР Госплаиĕ çумĕнчи ЦУНХУпа СССР Наркомземне 1941 çулти январĕн 10-мĕшĕнчен кая юлмасăр кирлĕ улăнусемпе хушусем туса хатĕрлесе, вĕсене колхозсенче хальхи вăхăтра туса пыракан учет системине кĕртсе, колхозсенчи учет ĕçне çакăн пек организацилеме хушас:

а) звенора — кашни колхозник ĕçлесе тунă ĕçкунĕсене звено çумне çирĕплетнĕ кашни культура тăрăх тата культурăсем енĕпе илнĕ тухăçлăх тăрăх шута илмелле;

б) бригадăра — кашни колхозник бригадири мĕнпур ĕçсенче тунă ĕçкунĕсене бригада уйрăм культурăсем енĕпе илнĕ тухăç тăрăх шута илмелле;

в) фермăсенче — выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕллĕпе ĕçлекен бригадири кашни колхозник ĕçлесе тунă ĕçкунĕсене вĕсене çирĕплетсе панă выльăхсенчен илнĕ продукци тăрăх, çавăн пекех тата çамрăк выльăхсене сыхласа хăварса вĕсене пăхса çитĕнтернин показателĕсем тăрăх шута илмелле.

17. ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) «ССР Союзĕн хĕвелтухăç районĕсенчи колхоз председателĕсене тӳлесси çинчен» 1940 çулти апрелĕн 21-мĕшĕнче йышăннă постановленине УСС Республикинчи колхозсенче 1941 çултан пуçласа пурнăçа кĕртмелле тăвас.

«1. Колхоз председателĕсене ĕçленĕ кашни уйăхшăн çакăнта кăтартнă чухлĕ ĕçкунĕ шутласа памалла: колхозра акмалли çĕр лаптăкĕ (пахчасене, садсене тата çырла-çимĕç пахчисене кĕртсе) 100 гектар таран пулнă чухне — 45 ĕçкунĕ; 101 гектартан пуçласа 300 гектара çити — 50 ĕçкунĕ; 301 гектартан пуçласа 500 гектара çити —55 ĕçкунĕ; 501 гектартан пуçласа 700 гектара çити—60 ĕçкунĕ; 701 гектартан пуçласа 1.000 гектара çити — 70 ĕçкунĕ; 1.001 гектартан пуçласа 1.500 гектара çити — 80 ĕçкунĕ тата 1.500 гектартан ытларах пулсан — уйăхра 90 ĕçкунĕ шутласа памалла.

2. Колхоз председателĕсене кашни уйăхрах çакăн пек виçепе укçан тӳлемелле: укçан илекен мĕнпур тупăш 10 пин тенкĕ таран пулсан — 25 тенкĕ; 10 пинрен пуçласа 25 пин тенкĕ таран — 50 тенкĕ; 25 пинрен пуçласа 50 пин тенкĕ таран — 75 тенкĕ; 75 пинрен пуçласа 100 пин тенкĕ таран—125 тенкĕ; 100 пинрен пуçласа 200 пин тенкĕ таран — 150 тенкĕ; 200 пинрен пуçласа 300 пин тенкĕ таран — 175 тенкĕ; 300 пинрен пуçласа 400 пин тенкĕ таран — 200 тенкĕ; 400 пинрен пуçласа 500 пин тенкĕ таран — 225 тенкĕ; 500 пинрен пуçласа 600 пин тенкĕ таран — 250 тенкĕ; 600 пинрен пуçласа 700 пин тенкĕ таран — 275 тенкĕ; 700 пинрен пуçласа 800 пин тенкĕ таран — 300 тенкĕ; 800 пинрен пуçласа 900 пин тенкĕ таран — 325 тенкĕ; 900 пинрен пуçласа 1.000 пин тенкĕ таран — 350 тенкĕ; 1.000 пин тенкĕрен ытларах пулсан — 400 тенкĕ тӳлеççĕ.

3. Укçан илекен тупăша татăклăн палăртиччен колхоз председателĕсене мĕн чухлĕ виçепе тӳлемеллине иртнĕ çулта укçан илнĕ тупăш суммине хисепе илсе палăртаççĕ. Колхоз председателĕсене мĕн чухлĕ тӳлеме палăртнă хисепрен 70 процентне кашни уйăхра тӳлемелле.

Колхоз председателĕсемпе татăклăн расчет тăвассине çулталăк вĕçĕнче, çулталăкри отчета колхозниксен пухăвĕ çирĕплетнĕ тата çав отчета ĕçсынчи депутатĕсен районри Совечĕн исполкомĕ пăхса тухнă хыççăн ирттереççĕ.

4. Колхозсене колхоз председателĕсем миçе çул ĕçленине кура, уйăхсерен шутласа паракан ĕçкунĕ çумне—виççĕмĕш çул ĕçлекен колхоз председателĕсене — пиллĕк процент, тăватăмĕш çул ĕçлекенсене — 10 процент, пиллĕк çул тата унран та ытларах ĕçлекенсене — 15 процент таран ĕçкунĕ хушса пама хушас».

Çак постановленине йышăннă май Украина ССР тăрăх çакăн пек хăйсен вăйĕсене çухатнă тесе шутлас:

а) СНК СССР тата ЦК ВКП(б) 1936 çулти февралĕн 22-мĕшĕнче «1936 çулти сахăр кăшманне контрактацилесси çинчен» йышăннă постановленин 3-мĕш пункчĕ;

б) СНК СССР 1938 çулти апрелĕн 3-мĕшĕнче «Долгунец-йĕтĕн сӳсĕпе вăрлăхĕн тухăçне ӳстермелли тата вĕсен пахалăхне лайăхлатмалли мероприятисем çинчен» йышăннă 434-мĕш №-лĕ постановленин 13-мĕш пункчĕ тата СНК СССР 1938 çулти июлĕн 23-мĕшĕнче «1938 çулта тырпулсене пухса кĕресси çинчен» йышăннă 775-мĕш №-лĕ постановленин 38-мĕш пункчĕ—звеньевойсемпе звено членĕсене премисем парасси çинчен кăтартса панă вырăн;

в) СНК СССР тата ЦК ВКП(б) 1938 çулти октябрĕн 20-мĕшĕнче «ССР Союзĕн кăнтăр-хĕвелтухăçĕнчи уяр çанталăк тăракан районĕсенче çирĕп тухăçлă тырпул туса илмелли мерăсем çинчен» йышăннă 1.169-мĕш №-лĕ постановленин 11-мĕш пункчĕ;

г) ЦК ВКП(б) тата СНК СССР 1940 çулти августăн 1-мĕшĕнче «Уборка тата ялхуçалăх продуктисен заготовки çинчен» йышăннă постановленин IV-мĕш разделĕн 7-мĕш пункчĕ тата V-мĕш разделĕн 3-мĕш пункчĕ—колхозсенче преми-надбавкăсене валеçмелли йĕрке çинчен каланă вырăн;

д) СССР Наркомтекстильпе Наркомзем çĕрмамăк-сыреца контрактацилесси çинчен 1939 çулти мартăн 31-мĕшĕнче çирĕплетнĕ типовой договорăн 14-мĕш пункчĕ пирки асăрхаттарине пăрахăçа кăларас.

* * *

СНК СССР тата ЦК ВКП(б) çапла шутлаççĕ: ялхуçалăх культурисен тухăçне ӳстернĕшĕн тата выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне хăпартнăшăн колхозниксене ĕçкунĕсем хушса тӳлемелле туни колхозсенче общественăллă хуçалăха малалла вăйлатса пыма, колхозниксен массисен пуян пурнăçне малалла татах ӳстерсе пыма пулăшĕ.

Кашни колхоз, кашни бригада тата звено, агрономи наукин çитĕнĕвĕсемпе тĕрĕс усă курса, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен — социализмлă пысăк тухăçлă тырпул туса илекен мастерсен опычĕпе анлăн усă курса, колхозсенче ялхуçалăхĕн мĕнпур культурисен тухăçне тата общественăллă выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне вăйлăн ӳстерĕç.

Колхозниксене ĕçленĕшĕн тӳлемелли çĕнĕ йĕркене тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пыни колхозсенче ĕç тухăçлăхне малалла хăпартса пыма, мĕнпур ялхуçалăх продуктисене, пирĕн çĕршыври ĕçсыннисен ытларах та ытларах ӳссе пыракан ыйтăвĕсене пĕтĕмĕшпех тивĕçтерме кирлĕ продуктсене туса кăларассинче çĕнĕ ӳсĕм тума май парĕ.

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ
В. МОЛОТОВ

ВКП(б) Центральный Комитечĕн секретарĕ
И. СТАЛИН.

1940 çулти декабрĕн 31-мĕш.

Суйлав кампанийĕн татăклă кунĕсем

КАУНАС, январĕн 4-мĕш. (ТАСС). Енер округ суйлав комиссийĕсен председателĕсен, Литвари Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн хуласемпе уездсенчи комитечĕсен секретарĕсен, уездсемпе хуласенчи исполкомсен председателĕсен республикăри канашлăвĕ пулса иртнĕ.

Литвари компарти секретарĕ Прейкшас юлташ республикăра суйлав кампанийĕ мĕнле пыни çинчен доклад тунă. Вăл Литва халăхĕн политикăллă активлăхĕ вăйлăн ӳсни çинчен, коммунистсемпе беспартийнăйсен сталинла блокĕн кандидачĕсене халăх питех те юратни çинчен калана.

Канашлăва пухăннисем суйлавсен кунĕнче суйлав участокĕсенчи ĕçе организацилесси çинчен сӳтсе-явнă.

* * *

Республикăри хуласемпе ялсем илемленсе капăрланаççĕ. Сурт-сем çине хĕрлĕ ялавсем кăларса çакнă. Пур çĕрте те — кандидатсен портречĕсем, вĕсен биографийĕсем çинчен каласа паракан листовкăсем. Участокселенчи суйлав комиссийĕсем, январĕн 12-мĕшĕнче суйлавсене пыма чĕнсе, суйлавçăсем патне хутсем яма пуçланă.

Пур çĕрте те пысăк хаваслăх. Вильнюс ял суйлав округĕнче 940 агитатор суйлавçăсен хваттерĕсенче каласусем ирттереççĕ. Вильнюс хулинче Сталинла Конституцине тата суйлав Положенине вĕренес тĕллĕпе çĕршер кружок ĕçлеççĕ. Шауляй хулинче агитаторсем хăйсен ĕçĕн опычĕ çинчен пĕр-пĕрне каласа пама тăтăшах пухăнаççĕ.

Нумай суйлав участокĕсенче суйлавçăсем хăйсен хушамачĕсене списоксене тĕрĕс кĕртнине тĕрĕслесе пĕтернĕ.

Советлă Латвири предприятисенчи производствăллă çĕкленӳ

РИГА, январĕн 4-мĕш. (ТАСС). Советлă Латвири ĕçшăнисем СССР Верховный Совет суйлавĕсен кунне производствăри çĕнĕ çитĕнӳсемпе кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. 1940 çулти 4-мĕш кварталта пиравăр фабрикисем плана 28 процента çити ирттерсе тултарнă. Трикотаж предприятийĕсем те лайăх ĕçленĕ. Вĕсем чăлхасемпе носкисем кăлармалли программăна 30 процент, сыхнă кĕпе-йĕм кăлармалли программăна 21 процент тултарнă. Ригăри ашкакай комбиначĕн коллективĕ пысăк çитĕнӳ тунă — квартал планне 182 процент тултарнă. Малта пыракан тир-сăран завочĕсем т. ыттисем те заданисене чылаях ирттерсе тултарнă.

Литва ССР правительствин решенийĕ

КАУНАС, январĕн 4-мĕш. (ТАСС). Литва ССР правительстви хресчен хуçалăхĕсене хăй вăхăтĕнче Литвари буржуаллă правительство ирттернĕ «çĕр реформинпе» çыхăнса тăракан, çĕршĕн тӳлемелли мĕнпур парăмсенчен хăтармалла тунă. Пиллĕк гектар таран çĕр тытнă ĕçхресчен хуçалăхĕсемпе ялхуçалăх ĕçĕнчи рабочисене 1940 çулпăн мĕнпур налогсемпе сборсене тӳлессинчен хăтарнă.

Коммунистсем çарпа санитари ĕçне вĕренеççĕ

ОРЕХОВО-ЗУЕВО. Парти хула комитечĕ парти активĕ çар ĕçне вĕренессине организациленĕ. Çар ĕçне коммунистăксем те вĕренеççĕ. Вĕсем валли ятарласа группăсемпе курссем тунă. Хĕрарăмсем 35 сын çарпа санитари ĕçне вĕренеççĕ. Вĕсем хушшинче пиравăр комбинатĕнчи партком секретарĕ Савельева, партин хула комитечĕн секретарĕ Соломотина, пиравăр тĕртекен фабрикăн директорĕ Зайцева т. ыт. те. Программа 152 сехетлĕ. Практикăллă занятисене врач-специалистсем ертсе пынипе ирттереççĕ.

Связист-телеграфистсем хатĕрленме хĕрарăмсенчен ятарласа группа тунă. Группăра тăвакансем Морзе азбукине вĕреннĕ. Часах аппаратсемпе практикăллă занятисем ирттерме тытăнаççĕ.

Йĕлтĕрçĕсен кросне хатĕрленес ĕç

МИНСК, январĕн 4-мĕш. (ТАСС). Хĕрлĕ Çар XXIII çул тултарнă ятпа пулакан йĕлтĕр кросне Белоруссири хуласемпе районсен центрĕсенчи 50.000 йĕлтĕрçĕ хутшăнаççĕ. Белоруссири комсомолăн районсенчи комитечĕсене 11.752 команда (кашни командăра 5 çын) заявкăсем панă, вăл командăсем кроса хутшăнасси çинчен пĕлтернĕ.

Минск облаçĕнче йĕлтĕрçĕсен кросне 3.182 команда хутшăнаççĕ, Барановичи облаçĕнче — 1.579 команда, Брест облаçĕнче—428 команда т. ыт. те. Пур çĕрте те йĕлтĕрçĕсен тренировкисем пыраççĕ. Витебскра, Оршара, Полоцкра, Ленельре тата ытти хуласенче те командăсен руководителĕсене хатĕрлес тĕллĕпе кĕске сроклă курссем ĕçлеççĕ.

„Большевистская печать“ ятлă сборник

ЦК ВКП(б) çумĕнчи Политиздат «Большевистская печать» ятлă сборник пичетлесе кăларнă. Сборникре Ленинпа Сталин пичет çинчен çырнă паллă статьясемпе тухса каланисене, вĕсем парти хаçачĕсене панă уйрăмăнах пысăк вырăн йышăнса тăракан директивăсене пичетленĕ. Кунсăр пуçне, сборнике партипе правительство руководителĕсен уйрăм статьисемпе сăмахĕсене кĕртнĕ.

Сборникре пичетленĕ материалсем большевикла пичет аталанса пынă тĕп тапхăрсене çутатса параççĕ. Пуçламĕш разделра Российăри рабочисен пичетне хатĕрлени тата вăл çуралса тухни çинчен тĕплĕн кăтартса панă. Кĕнекен юлашки разделĕнче марксизм-ленинизм классикĕсем «Новая Рейнская хаçат» çинчен, пичетĕн чĕлхипе техники çинчен каланисене пичетленĕ. (ТАСС).

„Украина историйĕн кĕске курсĕ“

КИЕВ, январĕн 4-мĕш. (ТАСС). «Украинна историйĕн кĕске курсĕ» пичетленсе тухнă. Кĕске курса пичете пама УССР Наукăсен Академийĕн Украина историйĕн институтĕнчи научнăй работниксен коллективĕ хатĕрленĕ.

Çак кĕнеке вăл — Украина историне авалхи вăхăтсенчен хальхи кунсене çити системăллă йĕркепе каласа парас тĕллĕпе тунă пĕрремĕш опыт.

Украина халăхĕн историне ССР Союзĕнчи халăхсен историйĕпе, класлă кĕрешӳпе нацийĕлĕхшĕн пынă движени историйĕпе тачă çыхăнтарса кăтартса панă.

Кĕнекене вăтам шкулти аслă классенче вĕренекенсем валли çырнă. Ана украинла чĕлхепе çмрса, лайăх ӳкерчĕксемпе илемлетсе кăларнă.

А. М. Горькин пичетленсе тухман пьесисемпе сценарийĕсем

Тĕнчери литературăн А. М. Горький ячĕпе тăракан институчĕ «А. М. Горький архивĕн» иккĕмĕш томне пичете пама хатĕрлесе çитернĕ. Çак томра аслă писателĕн алçырăвĕсенчен пухнă произведенисем—çырса пĕтереймен тата халиччен пичетленмен пьесăсемпе сценарисем пичетленсе тухаççĕ. Пĕрремĕш геройсен ячĕсем тăрăх вĕсене çакăн пек ятсемпе пичетлеççĕ: «Сомов тата ыттисем» (ку пьесăна Алексей Максимович çырса пĕтернĕ, анчах хăй шухăшланă таран тӳрлетсе çитермен), «Яков Богомолов» (виçĕ действи ытла çырнă), «Евграф Букеев», «Христофор Букеев», Сухотин «В людях» инсценировка валли çырнă картина т. ыттисем. (ТАСС).

Молдаван ССР çĕнĕ районĕсенчи МТС строительстви

Молдаван ССР çĕнĕ районсенче 20 машинно-тракторнăй станци организацинленĕ. Кăçалхи çураки тĕлне тата 32 МТС, тракторсене капитальнăй ремонт тумалли икĕ мастерской тума йышăннă.

Халĕ машинно-тракторнăй станцисене тракторсем, ытти ялхуçалăх машинисене кӳрсе килеççĕ. Трактористсем хатĕрлеме тытăннă. Вырăнсенче 800 тракториста вĕрентеççĕ. Çурхи ĕçсем пуçланнă тĕле Украинна Молдаван ССР çĕнĕ районĕсене 400 квалификацинллĕ çынсем парать. (ТАСС).

Ялхуçалăх специалисчĕсен çĕнĕ отрячĕ

МУСКАВ. Икĕ çул хăлла Мускавра, Свердловскра, Саратовра, Краснодарга, Уфара тата çĕршыври ытти хуласенче те СССР Наркомземĕн ялхуçалăх колхоз техникумĕсене организацинленĕ пулнă, ун пек техникумсем пурĕ 41 шутланаççĕ. Январĕн 1-мĕшĕнче çав техникумсенче пĕрремĕш выпуск пулнă. Ялхуçалăх техникĕн званинне пурĕ 5.340 çын илнĕ.

Çамрăк специалистсем колхозсенче ĕçлемелле.

„Азербайджан литературин историйĕ“

БАКУ. СССР Наукăсен Академийĕн Азербайджанри филиалĕн литературăта чĕлхен Низами ячĕпе тăракан институчĕ «Азербайджан литературин историне» тăвас тĕллĕпе ĕçлет. Çав изданин ултă томĕ (180 пичетлĕ листа) Азербайджан литературине мĕн авалхи вăхăтсенчен пуçласа эпир пурăнакан кунсем таранах тĕплĕн кăтартса памалла.

Çак изданисĕр пуçне, институт Азербайджан литературин историйĕн пĕр томлă курсне кăларать, вăл 1941 çул вĕçĕнче пичетленсе тухмалла.

ТĂРĂШСА ЁÇЛЕСЕН КĂНА ТУПĂШ ПЫСĂК ПУЛАТЬ

Иртнĕ якĕ çул пирĕн колхозăн малтă çулсем пулса тăраççĕ. Çак çулсенче эпир хамăр ĕçри хăшпĕр показательсемпе Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкине хутшăнма пултартăмăр. Малтанхи çул клевер туса илессипе, иккĕмĕш çулĕнче пыл туса илессипе выставкăна хутшăннă.

Иртнĕ çулта колхозниксем вăйлă тырпул туса илессишĕн начар мар кĕрешрĕç. Вĕсем çуркуннех хăйсен умне «çанталăк кирек мĕнле тăрсан та вăйлă тырпул туса илмеллех» тесе задача лартрĕç. Эпир иртнĕ çулта вырса илнĕ çĕр лаптăкĕ çине 1.800 лав тислĕк, 883 тонна торф, 58 центнер кĕл, 173 центнер фекали, 31 центнер чăх-чĕп тислĕкĕ тата ытти минерал удобренисем 75 центнер тăкнă, 74 гектар çинче юр тытса хăварнă. Пĕр сăмахпа каласан, эпир планпа пăхнинчен, тислĕксĕр пуçне, пурне те ытлашшипех пурнăçланă.

Мĕнле результатсем пулчĕç-ха 1940 çулта? Калас пулать, начар мар. 1939 çулта колхоз вăтам шутпа кашни гектартан 8,5 центнер тырă туса илнĕ пулсан, 1940 çулта 15,6 центнер туса илчĕ. Ырăм культурăсем тăрăх илсен: сĕлĕ 17,94 центнер, çурхи тулă 14,18 центнер, ыраш 13,47 центнер, пăрçа 10,63 центнер туса илтĕмĕр.

Колхоз 1940 çулта уйрăмăнах пахча-çимĕç тăвассипе паха тĕслĕхсем кăтартрĕ. Ку тĕлĕшпе ятарласах 15 çынтан организациленĕ бригада (бригадирĕ Е. Спиридонов юлташ) тăрăшса ĕçленине палăртмалла. Бригада членĕсем хăйсене шанса панă ĕçе тивĕçлĕн пурнăçларĕç. Акă тĕслĕхсем: кашни гектартан вăтам шутпа илсен хĕрлĕ кăшман 68 центнер, хăяр 245 центнер, помидор 161,69 центнер тата çур гектар çинчен купăста 57 центнер тухрĕ. Çапла вара эпир пахча-çимĕç енĕпе Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕ пулма кандидата тăма пултартăмăр.

Çитес кунсенче эпир ĕçкунĕсем тăрăх тĕштырă валеçме тытăнатпăр. Ку хисеплĕ те ответлă тапхăра колхоз государство умĕнчи обязательствăсене пурне те ытлашшипех пурнăçланнипе, пур страховой фондсене те хывнипе кĕтсе илет. Колхозниксем те пысăк хастарлăхпа кĕтсе илеççĕ. Тухăçлăн ĕçлесе ытларах тĕштырă илесси—çакă пулать кашни колхозникăн ĕмĕчĕ. Паллах, ĕçре малта пынисем, колхоз производствинче активлăн хутшăнса ĕçленисем тĕштырă сахал мар илеççĕ. Акă Егор Козлов çемьинех илер. Унăн çемьи (çемьере 5 çын, вĕсенчен ĕçлекенсем 3) хĕлĕн-çĕвĕн тăрăшса ĕçлерĕ, пĕтĕмпе 1307 ĕçкунĕ тунă. Çавăншăн Козлов çемьи тырпул 228 пăт ытла илет. Андрей Иваницкий çемьи те çулталăк хушшинче 1057 ĕçкунĕ гунă, Фекла Карпова пĕччен 73 пăт тырă илет т. ыт. те.

Тăрăшса ĕçлени тырпул тухăçлăхне ӳстерсе пыма, социализмлă çĕршыв тĕрекне татах та вăйлатма пулăшать. Тырпул тухăçлă пулсан колхозниксем те нумай тырă илеççĕ. Çакна пирĕн колхозниксем лайăх пĕлсе тăраççĕ. Ахальтен мар эпир кăçал тырпул тухăçлăхне ӳстерессишĕн большевикла кĕрешĕве тухрăмăр. Кĕркунне çĕртме сухине пĕтĕмпех турăмăр, халĕ тислĕк тăкатпăр, юр тытатпăр. Торф кăларас, кĕл, чăх-чĕп тислĕкĕ пухас ĕçе те пуçăннă. Ялхуçалăх машинисем пуртĕ хатĕр: 3 молотилка, 2 сеялка, 4 жнейка, 2 сортировка, 1 триер — пурте вĕсем сарайĕнче лараççĕ, 15 плуг ремонтра. Акмалли тырра пĕтĕмпех сортланă, сĕлле кăна триер витĕр кăлармалла.

Пирĕн задача: пĕлтĕр тунă çитĕнӳсене çирĕплетсе кăçал татах та пысăкрах çитĕнӳсем тăвасси. Вăя шеллемесĕр, çанталăкран хăрамасăр ĕçлесен, вăл задачăна эпир тивĕçлипех пурнăçлатпăр.

Е. И. ОТНЮКОВ.

Çĕмĕрле районĕнчи «Молодая сила» колхоз председателĕ.

МТ Станцисене кадрсем кирлĕ мар-и мĕн?

Илемлĕ те лайăх вырăна вырнаçнă Канашри механизаци шкулĕ. Вĕренӳ çурчĕсем тата общежитисем лайăх, вĕсенче çутă, таса. Кунтан инçех мар производство ĕçне вĕренмелли мастерскойсем, гаражсем, унтах столовăй пур. Шофер, тракторист, механик, комбайнер пулма вĕренме кирлĕ оборудованисем, машинăсемпе станоксем çителĕклĕ. Анчах та хальхи вăхăтра шкулта вĕренекенсем çитмеççĕ. План тăрăх 500 çын ытла вĕренмелле, халĕ пурĕ те 400 çын ытларах кăна вĕренеççĕ.

Пирĕн социализмлă ялхуçалăхне квалификациллĕ кадрсем питĕ кирлĕ. Анчах çакăн пек пуян шкул çителĕксĕр ĕçлени питех те килĕшӳсĕр. Мĕнрен килет вăл? Çураки тата уборка вăхăтĕнче МТ Станцисен руководителĕсем час-часах кадрсем çитменни пирки каласаççĕ. Çавăн пек пулать те вăл. Кăçал Канаш МТС-че трактористсем пулман пирки хĕрӳ ĕç вăхăтĕнче чылай тракторсем ĕçлемесĕр ахальларнă. Республикăри ытти МТ Станцисенче те ун пек фактсем сахал мар пулнă. Çаксене МТС руководителĕсем манса кайнă пулас. Çавăн çинчен калать ĕнтĕ хĕллехи вăхăтра МТ Станцисен руководителĕсем кадрсем хатĕрлес тĕлĕшпе пачах та çителĕксĕр ĕçлени.

Фактсем çине куçăпăр. Октябрьский, Калининский, Советский районсенчен Канашри механизаци шкулне трактористсем пулма вĕренме 90 çын ямалла пулнă. Кашниччен 30 çын. Çакна пĕр район та пурнăçа кĕртмен. Калининский район 17 çын, Октябрьский район 7 çын, Советский район 6 çын çеç янă. Ытти районсем те хăйсен планне пурнăçа кĕртмен. Иĕпреç районĕ кăна вăл тĕлĕшпе лайăх ĕçленĕ.

Трактор бригадисен бригадирĕсем пулма вĕренме ярасси татах та начар тăрать. Куславкка МТ Станцийĕн 5 çын ямалла пулнă, пĕр çын çеç янă. Тĕрĕссипе илсен ку МТС бригадирсем çитменнипе çулленех аптрать. Кăçал унта татах та начартарах картина куратпăр. МТС-ра пурĕ те пĕр бригадир çеç юлнă. Çапах та МТС руководителĕсем ун çинчен шухăшламаççĕ. Мĕн тăвас теççĕ-ши вĕсем çуракине тухсан? Сĕнтĕр, Красноармейский, Вăрмар МТ Станцисенче те ĕç çавăн пек пулса пырать.

Кăçалхи декабрĕн 1-мĕшĕнче механизаци шкулĕнче трактористсен квалификацине ӳстермелли курс ĕçлеме тытăнмалла пулнă. Унта 300 çын вĕренмелле пулнă. Республикăри нихăн МТС та курса пĕр çын та яман. МТ Станцисене пысăк квалификациллĕ кадрсем кирлĕ мар-и мĕн? Кирлĕ, ун çинчен МТС руководителĕсем кулленех каласаççĕ. Çапах та ĕçре татăклă мероприятисем йышăнмаççĕ. Уйрăмăнах Элĕк, Хĕрлĕ Чутай, Первомайский, Шăмăршă, Çĕмĕрле районĕсем начар ĕçлеççĕ.

Январĕн 1-мĕшĕнче шкулта комбайнерсен курсĕ ĕçлеме тытăнать. Кунта вĕренме те МТ Станцисем çителĕклĕ таран çынсем уйăрман. Ку вăл парти тата совет организацисем МТ Станцисенче кадрсем хатĕрлес тĕлĕшпе мĕнле ĕçленине тĕрĕслесе пыман пирки тата ялхуçалăх кадрĕсем хатĕрлес ĕç çине кирлĕ пек çавăрăнса пăхман пирки пулать.

Хĕрарăм-трактористсем, хĕрарăм-комбайнерсем хатĕрлесси çине сахал çавăрăнса пăхаççĕ. Çавăнпа ĕнтĕ халĕ механизаци шкулĕнче вĕренекенсем хушшинче хĕрарăмсем питех те сахал.

Партипе правительство социализмлă ялхуçалăхĕ валли пысăк квалификациллĕ кадрсем хатĕрлес ĕçе ялан пысăккăн хаклаççĕ. Кадрсем кирлĕ чухлĕ хатĕрлеме пирĕн лайăх условисем пур. Анчах чылай çĕрте çав паха условисемпе усă курма пĕлмеççĕ.

Канаш (хамăр корр.).

Вăрнартан пĕр километрта...

Вăрнартан пĕр километрта Аппер илĕ ларать. Нумай урамлă ял, çул çинчех кăçал тунă пысăк пĕве. Пĕве кыçĕнче тăвайккире çĕнĕ сад ӳсет. «Аппер» колхоз—районри пысăк колхозсенчен пĕри. 1940 çулта колхозниксем лайăх ĕçленипе вăйлă тырă туса илчĕç. Кашни гектартан вăтам шутпа 102 пăт тырă пуçтарса кĕртрĕç. Колхоз сентябрĕн 22-мĕшĕнчех авăн çапса пĕтерчĕ, государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра тултарчĕ. Пахчаçимĕççем те нумай пуçтарса илнĕ.

Колхозăн çак çитĕнĕвĕсем малалла татах та лайăхрах ĕçлеме хавхалантараççĕ. Колхозниксем тăрăшса ĕçлеççĕ, хĕлле те çулла ĕçленĕ пек лайăх ĕç тĕслĕхĕсем кăтартаççĕ. Анчах колхозăн çитĕнĕвĕсем колхоз председательне Степанов юлташа пĕтĕмпех лăплантарса янă, унăн пуçĕ çитĕнӳсемпе çаврăнма та пуçланă ĕнтĕ.

Кашни кун колхоз правленине вуншар колхозниксем киле-киле лараççĕ, ĕç суккипе аптраса ним тума пĕлмеççĕ. Каçхине кунта тата ытларах çынсем пухăнаççĕ. Колхоз ĕçне юратса тăракан колхозниксем халĕ вăрманта ĕçлеççĕ. Кашни кунах вăрманта 30—35 çын ĕçлет: вăрман хатĕрлеççĕ, гуртгараççĕ. Вунă-вуннăллăх çын колхозăн вăрлăхĕсене сортлаççĕ. Ытти колхозниксем ăçта-ха? Колхоз председателĕ Степанов, унăн заместителĕ Николаев та унпа питех те интереслеменеççĕ.

— Ĕçлеме тухмаççĕ,—теççĕ вĕсем.

Анчах колхозниксене организацилекен, вĕсене ĕçе хавхалантаракан кам пулмалла-ха? Колхоз правленийĕ, комсомол организацийĕ. Анчах вĕсем 1940 çулти çитĕнӳсем çинчен, вăйлă тырпул туса илни çинчен нумайрах каласаççĕ. Çак каласусенчен сиенсĕр пуçне урăх нимĕн те усси çук. Авăн çапса пĕтерĕнпе виçĕ уйăх иртрĕ, халĕ ĕнтĕ вăрлăх фондне туса хурса вĕсене пĕтĕмпех сортласа, тасатса хума май пулнă. Колхозăн триер тата триумф та тур. Çапах та 466 центнер вăрлăхран 200 центнер çеç тасатнă. Вăрлăх сортламалли машинăсемпе çителĕклĕ усă курни çук.

Вăрлăхсене сортланă çĕрте те йĕркелĕх çук. Сарай çуккипе кĕлет умĕнчех хăмасенчен тукланă кĕтесре вăрлăх сортлаççĕ. Юр вĕçтерет, тырă юрпа хутшăнса каять. Вара юрпа хутшăннă тырра урăх михĕсене тултараççĕ те. каллех кĕлете кайса тăкаççĕ. Çапла тунипе ăшăтсанах вăрлăх шăтса кайма, пăсăлма пултарать. Вăрлăхсене лабораторине кайса тĕрĕслеттермен.

Колхозăн машинисем, плугĕсем пурте ăçта киленĕ унта выртаççĕ. Пĕр сеялки кĕлетсем хушшинче юр çинчех ларать. Ана тасатман, тутăхса кайнă. 2-мĕшпе 3-мĕш бригадăсен плугĕсем сарайĕнче. Кунта юр каймасть, анчах плугсем таса мар. Вылăх витисем пагĕнче, уçă çĕрте сеялка ларать. Колхозра ялхуçалăх машинисене юсама халĕ те тытăнман, запаслă пайсене туянман.

— Пирĕн тимĕрçĕ те çук вĕт-ха. Каллех единоличник-тимĕрçĕ патне кайса йăлăнас пулать ĕнтĕ,—тет колхоз председателĕн заместителĕ Николаев юлташ.

Эпир Николаевна вылăхсен витисем патĕнче пĕр урапа тата пĕр çуна куртăмăр.

— Ытти çунасем, урапасем ăçта вара сирĕн?

— Пирĕн çуна-урапа, лаша таврашĕсем колхозниксем патĕнчех,—терĕ вăл ним тĕлĕнмесĕрех.

Чăнах та кунта урапасене, çунасене халĕ те пĕрлештермен, вĕсем колхозниксен килĕсенчех. Колхоз председателĕн Степанов юлташăн килкартине кĕрсе пăхрăмăр. Унăн кунта урапа та, çуна та пур. Çенĕкĕнче хăмăт-пăлвсем те пур.

Колхоз правленийĕнче радиоприемник тур. Кунта колхозниксем агротехника çинчен паракан лекцисене те итлеççĕ. Декабрĕн 17-мĕшĕнче радио тăрăх СССР Верховный Совечĕн депутачĕ, Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Сергей Ксенофонтович Коротков юлташ тухса каларĕ. Вăл колхозри ĕçсем пирки питĕ вырнаçуллă, вырăнлă сăнаçсем пачĕ.

Колхозниксем Коротков юлташ сăмахне хапăлласах йышăнчĕç. Колхозник Фирсов çапла калать:

— Пирĕн çинчен калана пекех калаçĕ Коротков юлташ. Пирĕн таврара мĕн чухлĕ удобрени: тислĕк, кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, торф. Мĕн пек тырă туса илме пулать !

Çакăн пек шутлать кашни тӳрĕ кăмăллă колхозник. Кашнинех хăйсен колхозне малта пыракан колхоз тăвассишăн.

Халĕ хĕрсех удобренисем хатĕрлемелле. Чăнах та хăшпĕр колхозницăсем Вăрнара кайса тислĕк тиесе киleççĕ. Анчах кунне 10 лав çеç каять. Мĕншĕн-ха пĕтĕм колхозницăсене удобренисем турттарма ярас мар? Вăрнар поселокĕнче таçта та тислĕк, таçта та кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ! Кунне тăватă-пиллĕк хут хутлама пулать. Анчах кунта ĕçе организацилени, ĕçе пуçарса яни çук. Çавнашкалах кĕл пусас ĕçе те пуçарман-ха. Уйра пĕр гектар çинче те юр тытман. Упӳрсем вăрманĕ те ял хыçĕнчех, çапă, шитсем гупма май пур.

Колхозра ку тарăнччен те кашни бригадăна хĕллехи вăхăтра мĕн тумалли çинçĕпĕн кăтартса паман. Колхозра агромероприятисене пурнăçласа тăма çирĕп план та туман. Колхоз бригадирĕ Василий Чашкин кашни çурах вăйлă тырпул туса илет, Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкинче те экскурсине пулнă. Унăн ĕçлес хăрăслăхĕ пысăк, анчах ăна никам та пулăшмасть.

Колхозра яланлăх звенносем организацилесси çинчен икĕ çул каласаççĕ ĕнтĕ. Кунта агрономсем те килнĕ, звенносем те уйăрса панă. Ĕçе тухсанах звенносем саланса кайнă. Кăçал та звенносем организацилемен. Халĕ звеносенче ĕç вĕремелле, вăрлăх тасатмалла, удобренисем хатĕрлемелле.

Колхозра çирĕп дисциплина пулмалла. Упнерте вара ĕç дисциплини начар. Хĕле кĕрсен хăшпĕр колхозниксем ĕç çине сӳрĕккĕн пăхаççĕ Вăрнара, Калининона ытларах сӳреççĕ. Колхозри наянсем кунта питĕ ирĕклĕ пурăнаççĕ. Колхозник Исак Храмов иртнĕ çулсенче колхозра ĕçлемен, пĕрмаях Вăрнарта ĕçлесе сӳренĕ. Кăçал вăл çуллахи вăхăтра ĕçлерĕ. Унăн ĕçĕнеки çинче 142 ĕçкунĕ. Колхозра тырă лайăх пулнă, çавăнпа та ĕçленĕ вăл. Колхозра уборка пĕтсен каллех çухалчĕ Храмов. Паян вăл Вăрнарта, ыран — Горькинче. Вăл заготскотăн штатнăй работникĕ пекех пулса кайнă. Вылăхсемпе хуларан хулана çеç сӳрет. Унăн арăмĕ Александра Храмова кăçал 5 ĕçкунĕ тунă. Тракторист арăмĕ Семенова та кăçал 45 ĕçкунĕ çеç тунă. Ăçта сӳрет вăл? Вăрнара сĕт-сӳ сутма каять, колхоз ĕçне тухма пăрахнă. Клихерия Ксенофонтова, Александра Савина колхозницăсем 70-шер ĕçкунĕ тунă. Халĕ вĕсем колхоз ĕçне хутшăнми пулчĕç.

Кун пек наянсем, ĕçе пăсакансем нумай. Колхоз правленийĕ вĕсене ачашлать. Комсомол организацийĕ колхозниксем хушшинче массăллă-аннантарулла ĕçе туса пымасть. Ялта туллимар вăтам шкул пур. Кунта интеллигенци йышлă. Вĕсем хăйсен пухăвĕнче федякинецсен чĕнĕвне ырланă та, анчах кашни кунах 4—5 учитель ĕç пĕтсенех Вăрнара хваттерсене калçĕ те, урăх ялта пулмаççĕ.

ЕВГ. ЕНИ.

Агротехникăна вĕренме тытăнчĕç

Вăрмар районĕнчи партипе совет активĕ агротехникăна вĕренме тытăнчĕ. Декабрĕн 28-мĕшĕнче пĕрремĕш лекци пулса иртрĕ. Машинно-тракторнăй станцин старший агрономĕ Петров юлташ «Основы обработки почвы» тема тăрăх лекци вуласа тухрĕ.

Районри актив малашне агротехника ыйтăвĕсем тăрăх кашни уйăхрах 3—4 лекци итлеме килĕшрĕ.

П. Данилов.

Умерчăк çинче: Улатăрти 7-мĕш №-лĕ вăтам шкулти юрăпа ташă ансамблĕ.

Г. Костин фото-ӳкерчĕкĕ.

КЕСОВОГОРСКРИ ПИОНЕРСЕН ПАХА ПУÇАРĂВĔ

Кесовогорскри (Калинин облаçĕ) вăтам шкулти пионерсемпе вĕренекенсем çемиçе çул хушши ĕнтĕ паха та ырă ç туса пыраççĕ. Вĕсем колхозăн амрăк выльăхĕсене шефа илсе пăхса стереççĕ. Ачасем çак ĕçре чылай пысăк çитĕнӳсемех тунă. Ахальтен мар ĕнтĕ çамрăк выльăхсене шефа илсе лайăх ĕçленĕшĕн Коля Кузьмина Витя Войдальскине правительство «Знак Почета» орденĕпе наградăланă. Çак ĕçе халĕ те ачасем чыслăн туса пыраççĕ. Çавăнпа пĕрлех хăйсен чи пирвайхи обязанноçне — шкулта лайăх вĕренессине те манмаççĕ.

Кунта ачасен кашнинех шефа илнĕ пăру пур. Зоотехниксемпе ветеринарăй врачсем çамрăк выльăхсене мĕнте пăхмалли çинчен тăтăшах ăнланатараççĕ. Ачасем пăрусене тасатаççĕ, вĕсен айĕнчи улăмсене улăштарсах тăраççĕ, уйрăмăнах вĕсен сывлăхĕшĕн тăрăшаççĕ.

Кашни кун ачасенчен кам та пулин пăрусен витинче дежурствăра тăрать. Дежурнăй пӳлĕмри тата пăрусене çитерекен апатсен температурине, нормине виçет. Мĕн курни, туни çинчен дневник çине çырать.

Фермăра ĕçлекенсемпе çамрăк животноводсен кашни уйăхрах производствăллă канашлусем пулса иртеççĕ. Хĕле хатĕрленнĕ май пăру витисенчи шăтăк-çураксене тĕрĕслесе юсанă, вĕсене хĕл каçма ăшă туса панă тата ыт. те.

Çапла вара юлашки 4 çул хушшинче ачасем колхоза 260 лайăх, тутă пăру ӳстерсе панă. Вĕсем кашни кун вăтамран 640 грамм ӳссе пынă.

Нумай пулмасть, вĕсем хăйсен лайăх ĕçĕсем çинчен «Пионерская правда» хаçат урлă каласа пачĕç, Совет Союзĕнчи колхозсемпе совхозсенче пурăнакан пионерсемпе вĕренекенсене çамрăк выльăхсене шефа илсе пăхма чĕнчĕç.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕ вĕсен пуçарăвне ырласа, комсомолăн районсенчи, облаççенчи, крайсенчи комитечĕсене тата союзăн республикăсенчи Центральный Комитечĕсене Кесовогорскри вĕренекенсен чĕнĕвне шкулсенче, пионер отрячĕсенче, комсомол организацисенче сӳтсе-явма хушнă.

Пирĕн республикăра та çамрăк выльăх-чĕрлĕхсене, кроликсене пăхса ӳстерекенсем сахал мар. Акă Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Пантăк ялĕнчи пионер Коля Дьячков икĕ çул хушшинче пĕр кроликран аминчен 370 кролик пăхса çитĕнтернĕ, 4 килограмм мамăк пуçтарса илнĕ. Вăл 1939 çулти Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕ пулнă. Ярабайкассинчи (Ишлей р.) туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем колхоз ферминчи çамрăк выльăхсене шефа илсе, лайăх пăхса пыраççĕ. Кесовогорскри пионерсен çырăвне пĕрлешсе вуласан Çĕрпӳ районĕнчи «Шумашар» колхозри пионерсем колхозри пăрусене, чăх-чĕпсене шефа илнĕ. Акă тата Уравăшри вăтам шкулта (Вăрнар р.) вĕренекенсем Н. Алексеев, И. Осипов тата А. Дмитриев иртнĕ çулхине кашниех пĕрер тиха шефа илнĕ пулнă. Вĕсем хăйсен ĕçне тӳрĕн туса пынă. Халĕ вĕсем пăхса ӳстернĕ тихасене Хĕрлĕ Çар фондне илнĕ. Çапла вара ачасем питех те пысăк ĕç тунă.

Анчах та калас пулать, нумай çĕрте çамрăк выльăхсене шефа илмен-ха. Хăшпĕр çĕрте ачасем колхоз витине пырсан вĕсене унта кĕртесшĕн мар. «Çамарти чăххине вĕрентме килнĕ» текен шухăшсем те пур. Паллах, ачасене çакăн пек каласа кĕтсе илни сиенлĕ япала. Хальхи вăхăтра шкулти вĕренĕве практикăпа сыхăнтарса пынă вăхăтра ачасем выльăх-чĕрлĕхсене пăхса ӳстерме вĕренни питех те усă парать. Çавăнпа та колхоз правленийĕсем, зоотехниксем, ветеринарăй врачсем çак ĕçсене ачасене пур майпа та пулăшу памалла. Вĕренекенсемпе çамрăк выльăхсене пăхса çитĕнтересси çинчен каласусем, докладсем, лекцисем ирттересшĕн организацилемелле.

Кесовогорскри пионерсен паха та лайăх ĕçĕсем пирĕн республикăри пур вĕренекеншĕн те пример пулмалла. Вĕсен примерĕпе лар çĕрте усă курмалла.

Зоотехникăллă опытлă станцире

Чăвашсен зоотехникăллă опытлă станцийĕ тунă паха ĕçсене хамăр республикăра кăна мар, республика тулашĕнче те лайăх пĕлеççĕ. Ĕнесенчен сĕт суса илес тата сысна çурисене пăхса ӳстерес тĕлĕшпе тунă ӳсĕмсене 1939 çулти Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкинче кăтартса панă. Выставкăн Главнăй Комитечĕ опытлă станцине 2-мĕш степеньлĕ диплом, 5 пин тенкĕ укçа тата мотоцикл парса наградăланă. Доярка Татьяна Никитина, телятница Анна Антрюшина, сысна ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен научнăй сотрудник Кузьминская юлташсем пĕчĕк кĕмĕл медаль илме тивĕçлĕ пулнă.

1940 çулта опытлă станцири таварлă сĕт-çу тата сысна фермисем Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкине хутшăннă. 1937—39 çулсенче вăтам шутпа кашни ĕнерен 2.667 литр сĕт суса илнĕ. Ялхуçалăх экспоначĕсен шутĕнче «Песня» ятлă ĕне пулнă. Çак ĕнерен 297 кун хушшинче 6.809 литр сĕт суса илнĕ. Выставкăн Главнăй Комитечĕ вăл ĕнене пĕрремĕш степеньлĕ аттестат панă. «Песня»—красногорбатовский ратпа лайăхлатас тĕлĕшпе чылайранпа тимлĕн ĕçленĕ. Вырăнти ратлă ĕнепе красногорбатовский ратпа лайăхлатнă ĕнене пĕр пек условире, пĕр пек апат парса усранă. Вырăнти ратлă ĕне 321 килограмм, красногорбатовский ратпа лайăхлатни 398 килограмм е 24 процент ытларах таякан пулнă. Вырăнти ратлă ĕне 1.353 литр, красногорбатовский ратпа лайăхлатни 2.233 литр сĕт панă. Çавăн пекех вырăнти сыснасене крупно-белăй английски ратпа лайăхлатас тĕлĕшпе паха опытсем тунă. Пĕр пек лайăх условире пăхса усрасан вырăнти ратлă сысна 61 килограмм, английски ратпа лайăхлатни 140 килограмм йывăрĕш ӳснĕ. Лайăх ратлă сысна çăвăрсем нумай çăвăрланă.

Опытлă станцири научнăй сотрудниксем выльăх-чĕрлĕх ратне лайăхлатас тĕлĕшпе республикăри колхозсене пысăк усă пама пултараççĕ. Научнăй сотрудник Кухарский юлташ республикăри уйрăм колхозсемпе сыхăну тытса ĕçлет. Колхозсене выльăх-чĕрлĕхрен ытларах тупăш илме вĕрентет.

Колхозсем обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре çитĕнӳсем тăвассишĕн кĕрешеççĕ. Чăвашсен зоотехникăллă опытлă станцийĕ çак ĕçре колхозсене пулăшса, хăйсен опычĕпе ĕçлеме вĕрентме пултарать.

Çĕрпӳ хули. **Т. МАЙОРОВ.**

БИБЛИОГРАФИ

Паха кĕнеке

Чăваш АССР Государство Издательстви 1940 çулта И. Сталинăн «Пролетарисен класĕпе пролетарисен партийĕ» ятлă кĕнекине чăвашла куçарса кăларчĕ. Чи малтан Сталин юлташăн ку произведенийĕ Тифлисра, 1905 çулта, «Пролетариат кĕрешĕвĕ» ятлă хаçатра грузин чĕлхипе пичетленсе тухнă. «Пролетариатис брдзола» хаçат РСДРП Кавказри союзнăй комитечĕн органĕ пулнă. Вăл хаçат Сталин, А. Цулукидзе тата С. Шаумян ертсе пынипе 1903 çултан пуçласа 1905 çула çитиччен грузинла, вырăсла, арменла чĕлхепе тухса тăнă. Ăна Авлабарти вăрттăн типографинче пичетленĕ.

«Пролетариат кĕрешĕвĕ» хаçатра Сталин юлташăн ытти статьисем те пичетленсе тухнă. Сăмахран, «Ответ социал-демократу» ятлă статьине илĕпĕр. Вăл статьяна Ленин партин Центральный органĕн — «Пролетарий» хаçатăн 1905 çулта тухнă 22-мĕш номерĕнче питĕ ырласа хаклаканă. Сталин юлташăн ытти статьисем те революцишĕн питĕ паллă вырăн йышăнса тăнă.

«Пролетарисен класĕпе пролетарисен партийĕ» ятлă статьине Сталин юлташ парти уставĕн пĕрремĕш пунктĕ пирки çырнă.

1903 çулта РСДРП иккĕмĕш съездĕнче уставăн пĕрремĕш пунктне меньшевик Мартов каланă пек йышăннă. Çавăнпа Сталин юлташ çапла çырать:

«Партин иккĕмĕш съезчĕн, Мартов определенине йышăннă съездăн решенине çителĕклĕ шухăшламасăр тунă тесе шутласа, партин виççĕмĕш съезчĕ иккĕмĕш съезд тунă йăнăша, паллах, тухăсетĕ те Ленин юлташăн определенине йышăнĕ, тесе шанатпăр». (стр. 18—19).

Сталин юлташ хăйĕн çак статьине партин виççĕмĕш съездне хатĕрленес май çырнă. Виççĕмĕш съезд Сталин юлташ шанăсене пурнăçа кĕртнĕ, 1905 çулти апрелĕн 25-мĕшпе майăн 10-мĕш (апрелĕн 12—27-мĕш) хушшинчи вăхăтра Лондонра ĕçленĕ большевикла пĕрремĕш съезд (РСДРП 3-мĕш съезчĕ) уставăн пĕрремĕш пунктне Ленин кăтартнă пек улăштарса йышăннă.

Сталин юлташ хăйĕн «Пролетарисен класĕпе пролетарисен партийĕ» ятлă статьинче большевиксемпе меньшевиксем хушшинчи тĕп уйрăмлăха кăтартать. Сталин юлташăн вăл статьяри шухăшăсем Ленинăн «Шаг вперед, два шага назад» ятлă кĕнекери шухăшсемпе тачă çыхăнса тăраççĕ, пĕр ыйту çинчен каласçĕ.

Сталин юлташ хăйĕн статьинче меньшевиксене хирĕç вăйлăн кĕрешет, пролетарисен партийĕ тата большевиксен организацийĕ принципĕсем çинчен Ленин вĕрентнĕ пек çырать.

«Пролетарисен класĕпе пролетарисен партийĕ» кĕнекене Сталин юлташ йышлă массăна ăнланмалла, ыйту çине ответ парса çырнă. Кĕнекери тĕп ыйту:

«...Эпир кама парти членĕ тесе калама пултаратпăр?» (стр. 7—8).

«Кама-ха эпир Росс. Соц. Дем. Рабочи Партийĕн членĕ тесе калама пултаратпăр, урăхла каласан, парти членĕн обязанноçĕсем мĕнле?» (стр. 8).

«Пирĕн парти ĕнтĕ руководительсен организацийĕ пулса тăрать» (стр. 10), тет Сталин юлташ.

Парти членĕн обязанноçĕсене уйрăмăн каласа панă хыççăн, Сталин юлташ çапла пĕрлештерсе çырать:

«...партире члента тăрас тесен, партин программине, тактикине тата организацилле шухăшăсене пурнăçа кĕртни кирлĕ; парти шухăшăсене пурнăçа кĕртсе пымашкăн çав шухăшсемшĕн кĕрешни кирлĕ; çав шухăшсемшĕн кĕрешмешкĕн парти организацинче ĕçлени тата партипе пĕрле ĕçлени кирлĕ» (стр. 10).

«...кам çак партин программине йышăнать, партие материаллă пулăшу парса пырать тата партин организацийĕсенчен пĕринче хутшăнса ĕçлет, çавна Российăри Социал-Демократла Рабочи Парти членĕ тесе калама пулать.

Çакăн пек ĕнтĕ парти уставĕн пĕрремĕш пункчĕ тĕлĕшпе Ленин юлташ панă определени.

Çак определени, куратăр ĕнтĕ, пирĕн парти пĕччен çынсен пуххи мар, вăл централизацинленĕ организаци пулса тăрать тесе вĕрентнинчен тухса тăрать.

Çакăнта пулать ĕнтĕ çав определенин питех те пысăк пахалăхĕ» (стр. (1—12).

Кĕнекен иккĕмĕш пайĕнче Сталин юлташ Мартов определенине критикленет, вăл ниме юрăхсăррине кăтартать. Мартов определенинче партире члента тăма кирлĕ виççĕмĕш условине (парти организацисенчен пĕринче хутшăнса ĕçлемелли тивĕçе) кăларса пăрахни çинче чарăнса тăрать. Сталин юлташ Мартовăн тăрлавсăр определенийĕ пирки çак сăмахсемпе тăрăхласа кутать:

«...партин кирек мĕнле организацине ге кĕмесĕрех парти членĕ пулма пултать иккен (акă ĕнтĕ «парти!»)» (стр. 13).

«Мартов çапла ответ парать: парти вăл организаци мар; е тĕрĕсрех, парти вăл организацинленмен организаци пулса тăрать, тет (акă ĕнтĕ сире «централизм!»)» (стр. 16).

«Çапла ĕнтĕ, господасем, килĕрех... банкета!» (стр. 17).

Сталинăн «Пролетарисен класĕпе пролетарисен партийĕ» ятлă кĕнеки марксизм-ленинизма вĕренес ĕçре кирлĕ кĕнекесенчен пĕри пулса тăрать.

Сталин юлташ кĕнекине чăвашла ăнланмалла куçарнă. Анчах куçарнинче çитменлĕхсем те çук тесе каламалла мар. «Мартов хăшпĕр сӳпĕлти (социал-демократсене) хĕрхенет пек тата вĕсене партне кĕме алăксене хупассăн мар» (стр. 15) тенĕ предложенкре «социал-демократсене» сăмахсене скобка ăшне мар, кавычкăсем ăшне хупмалла пулнă.

Вырăсла:

«Разве не ясно само собой, что нашу партию не удовлетворит **платоническое** (подчеркнуто мною—П. Д.) **принятие** ее программы, тактики и организационных взглядов, что она несомненно потребует от своего члена **осуществления** принятых взглядов?» (стр. 6).

Чăвашла куçарнă:

«...пирĕн партие, унăн программине, тактикине тата организацилле шухăшĕсене **хаваслансах** (паллă туни маян — П. Д.) **йышăнни** çырлахтарасрукки, вăл хăйĕн членĕ умне, паллах питĕ, йышăннă шухăшсене пурнăçа кĕртме требовани лартасси хăйне-хăех паллă мар-и мĕн?» (стр. 9).

Çак предложенире «платоническое» сăмаха чăвашла «хаваслансах» тесе куçарни вырăнлă мар. Ушаков редакциленĕ «Толковый словарь русского языка» ятлă кĕнекере «платонический» сăмаха ака мĕнле ăнлантарса панă:

«Платонический... не осуществляющийся, не выражающийся практически, на деле, отвлеченный, сохраняющий свое значение только в идее (шутл. или ирон.)».

Куçаракан Г. А. Молостовкин та, редактор П. Т. Золотов та «платонический» сăмах шухăшĕ мĕне пĕлтернине тавçăрса илейменни курăнать.

П. ДАНИЛОВ.

Англипе Германи хушшинчи вăрçă

БЕРЛИН, январĕн 4-мĕш. (ТАСС). Германири информаци бюровĕ Германи çарĕн верховнăй командованийĕ кăларнă çакăн пек сводкăна парать: «Çанталăк начар пулнă пулсан та, Германи самолечĕсем разведкăллă ăнăçлă вĕçевсем тунă. Иртнĕ каçхине Германи самолечĕсен пысăк соединенийĕ Бристоль çине пырса тапăннă. Хула çине нумай бомбăсем пăрахнă, вĕсем тивнипе пушарсем тухнă тата взрывсем пулнă. Кунсăр пуçне, Кăнтăр Англири ытти кирлĕ объектсем çине те бомбăсем пырса пăрахнă.

Ыран январĕн 4-мĕш тенĕ чух çĕрле Англи самолечĕсем çурçĕр Германири 4 пункт çине пырса тапăннă. Самолетсем пуринчен ытларах вут чĕртсе яракан бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем тивнипе нумай çĕрте пушарсем тухнă. Çар объекчĕсене тата çар-хуçалăх объекчĕсене кӳнĕ сиен пысăках мар. Англин икĕ самолетне персе антарнă. Германин пĕр самолечĕ хăйĕн базине тавăрăнман.

ЛОНДОН, январĕн 4-мĕш. (ТАСС). Англире çапла пĕлтернĕ: Ыран январĕн 4-мĕш тенĕ чух çĕрле Германи авиацийĕ Бристоль çине нумай вăхăт хушши пыра-пыра тапăннă. Фугаслă бомбăсем тивнипе тата пушарсем тухнипе хулана чылаях пысăк сиен кӳнĕ. Вилнисемпе аманнисем пур. Кунсăр пуçне, Англин ытти районĕсене те бомбăсем пырса пăрахнă. Сиенсем пысăках мар. Вилнисемпе аманнисен хисепĕ çинчен сведенисем илмен.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ыран январĕн 4-мĕш тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ Бремен çине вăйлăн пырса тапăннă. Хулара нумай тĕлте пысăк пушарсем тухнă.

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 4-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: ыран январĕн 4-мĕш тенĕ чух çĕрле кăнтăр-хĕвеланăç Англири пĕр хула çине питех те нумай бомбăсем пырса пăрахнă. Агентство шухăшĕпе, вăл хула—Плимут е Кардифф.

Лондонра самолетсенчен сыхланма виçĕ хут тревога панă. Бэйсуортерститра тухнă пушарсене пула унти çуртйĕрсем пĕтĕмĕшпе пекех пĕтнĕ.

Албанири вăрçă ĕçĕсем

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 4-мĕш. (ТАСС). Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, фронтăн центральнăй секторĕнче, Клисурăпа Тепеленерен çурçĕр-хĕвеланăç енче, грексем итальянецсен оборона линине татса кăснă. Клисура секторĕнче грексем Берат патнелле каякан шоссе çулĕ тăрăх малалла куснă. Клисурăран çурçĕр-хĕвеланăç еннелле 10 миляра Бубеси ялне туртса илнĕ. 183 итальянеца тыткăна илнĕ.

Греци колоннисем Шушика юханшывĕн айлăмĕ тăрăх малалла кайса пыраççĕ. Вĕсене хирĕç итальянецсем вăйлăн çапăçаççĕ. Валона хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăç еннелле 12 миляра грексем Гьерми ялне туртса илнĕ. Итальянецсенне орудисем, пулеметсем, минометсем туртса илнĕ, 568 итальянеца тыткăна илнĕ.

ЛОНДОН, январĕн 4-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англипе Греци авиацийĕ çурçĕр фронтĕнче итальянецсен мĕнпур позицийĕсем çине бомбăсем пырса пăрахнă. Уйрăмăнах Эльбасанран тухса каякан çул çине хаярăн тапăннă, мĕншĕн тесен вăл çул тăрăх Эльбасанран фронталла каякан грузовиксем иртсе пынине курнă.

Мокра хулин сĕвекĕсем çинче, Радокале патĕнче тата Плешиштран кăнтăр енче, грексем итальянецсене çĕнĕ позицисем çине хăваласа янă.

ИТАЛИ КОМАНДОВАНИЙĔН СВОДКИ

РИМ, январĕн 4-мĕш. (ТАСС). Итали командованийĕ çапла пĕлтерет: ĕнер Барди районĕнче противник атака тума пуçланă. Унăн çĕр çинчи, тинĕс çинчи тата сывлăшри вăйĕсем Бардине хирĕç çапăçаççĕ. Итали войскисем противника хирĕç хаярăн çапăçаççĕ, ăна пысăк сухатусем кӳреççĕ. Итали авиацийĕ противник карапĕсемпе базисем çине, механизированнăй чăтăсем çине бомбăсем пыра-пыра пăрахать тата пулеметсенчен перет. Çапăçу малаллах сарăлса пырать. Италин виçĕ самолечĕ хăйсен базине тавăрăнман.

Греци фронтĕнче разведка отрячĕсен ĕçĕсем палăраççĕ, икĕ енĕ те пĕр пĕрин çине артиллеринрен персе тăраççĕ. Итали авиацийĕ противникăн çар сооруженийĕсемпе войскисем çине бомбăсем пыра-пыра пăрахать.

Хĕвелтухăç Африкăра, Англо-Египет Суданĕн чиккинче, противник отрячĕсем пирĕн малти постсенчен пĕрне атакăлама хăтланнă, анчах ăна каялла хăваласа янă.

Барди районĕнчи çапăçусем

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 4-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, англичансем Бардине хирĕç татăклă штурм пуçланă.

ЛОНДОН, январĕн 4-мĕш. (ТАСС). Ĕнер каçхине Англин Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи войскисен командованийĕ çакăн пек пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă: «Барди районĕнчи операцисем лайăх сарăлса пыраççĕ. Пирĕн войскăсем Италин 5 пин салтакне тыткăна илнĕ те ĕнтĕ».

ЛОНДОН, январĕн 4-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Бардине атакăлакан Австрали войскисен чăçĕсем итальянецсем оборона валли тунă укрепленисен кăнтăр-хĕвеланăç пайне çĕмĕрсе кĕнĕ (вăл укрепленисем Бардирен 5 миляра). Вĕсем противникăн укрепленийĕ посчĕсене 40 поста яхăн туртса илнĕ. Вăл постсем пĕр-пĕрин хушшинче пралуклă загражденисемпе сыхăнса тăраççĕ, Италин çак районри укрепленийĕсем чи кирлĕ пайĕ пулса тăраççĕ. Укрепленисене хӳтлекен итальянецсен пĕр пайне артиллеринрен персе пĕтерсе тăкнă, вĕсен пысăк пайне тыткăна илнĕ.

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 4-мĕш. (ТАСС) Юнайтед пресс агентствин корреспонденчĕ Канберрăран (Австралия) пĕлтернĕ тăрăх, Австралин çар министрĕ Спендер, хальхи вăхăтра Египета пынăскер, правительствăна телеграф тăрăх çапла пĕлтернĕ: Австрали войскисем Бардине пырса кĕнĕ, 8 пин итальянеца тыткăна илнĕ.

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 4-мĕш. (ТАСС) Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ Каиртан çапла пĕлтерет: Австралин Бардине пырса çитнĕ войскисем кăнтăр енне кӳçса пыраççĕ, противникăн тылри укрепленийĕсене тата пулеметсем валли бетонран тунă укрепленисене атакăлаççĕ.

Франци Индо-Китайĕпе Таи войскисем хушшинчи çапăçусем

ШАНХАЙ, январĕн 4-мĕш. (ТАСС). Трансоцеан агентствин Бангкокри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Таире кăларнă коммюнике тăрăх, январĕн 4-мĕшпе 2-мĕшĕне чикĕри пунктсем сывăхĕнче—Чиэнг-Рай, Нонг-Кай тата Аран-Прадет патĕнче Таипе Франци Индо-Китайĕн войскисем хушшинче пĕчĕк çапăçусем пулса иртнĕ. Франци Индо-Китайĕн чăçĕсем хушшинче пĕр çын вилнĕ, 11 çын аманнă. Таи войскисен çухатусем пулман.

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

ЦЕНТРАЛЬНАЙ КИТАЙРА. Декабрĕн 29-мĕшĕнче Хубэй провинцийĕн кăнтăр пайĕнче Китай войскисем Цзунян хулине атакăланă. Çав кунах Китай войскисем Тунчэн çывăхĕнче Япони войскисене атакăланă.

Декабрĕн 29-мĕшĕнче Яцзы юханшывĕ çинче, Дунлю çывăхĕнче (Аньхуэй провинцийĕ), Япони çар карапĕ мина çине пырса тăрăннă. Карап командăпа тата боеприпассемпе пĕрле шыва путнă.

ÇУРÇĔР КИТАЙРА. Шаньси провинцийĕн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнче, Маоцзинду секторĕнче, пысăк мар çапăçусем пыраççĕ. Çак районра юлашки вăхăтра пулса иртнĕ çапăçусенче японецсен вилсе тата аманса стройран тухнисем темиçе çĕр çын шутланаççĕ.

Кăнтăр Китайри фронтри лару-тăру çинчен сведенисем çук.

* * *

Январĕн 2-мĕшĕнче Японин 12 самолечĕ Куньмин хули çине пырса тапăннă. (Юньнань провинцийĕ). Аэродром çине бомбăсем пăрахнă. Япони авиацийĕн тепĕр отрячĕ электростанци çине бомбăсем пăрахнă.

Январĕн 4-мĕш. (ТАСС).

Финляндире çимĕçсем тĕлĕшпе пысăк йывăрлăхсем сисĕнеççĕ

ХЕЛЬСИНКИ, январĕн 4-мĕш. (ТАСС). Малтанах пĕлтернĕччĕ, Хельсинкире çăн-çăкай тĕлĕшпе пысăк йывăрлăхсем пурри палăрать. Аш-какая карточкăсемпе те пур чухне те илме май çук. Çакна пула правительство вылăхсене ирĕксĕрлесех пусасси çинчен решени тăшшăнă. Çав распоряжени тăрăх майăкаллă шултра вылăхсенчен 10—12 процентне тата пăрусенчен 20 процентне ирĕксĕрлесех пустараççĕ.

Çу памалли нормăна çурри таранах пăкарнă. Вылăх апачĕ çитменни те кыттăн сисĕнет. Базарсенче вылăх апачĕ сутăн илме май çук.

Финлянди правительстви йышăннă тăрăх çĕрулмине ирĕклĕн сутма пĕр вăхăтлăха чарнă.

Рангель— Финлянди премьер-министрĕ

ХЕЛЬСИНКИ, январĕн 4-мĕш. (ТАСС). Финляндин çĕнĕ кабинетне туса йĕркелени çинчен официальнăй йĕркепех пĕлтернĕ. Премьер-министра прогрессивлă парти членне Иоганн Рангеле лартнă. Кабинет составĕ хăнченхисех юлнă, çулйĕр министрĕнче çĕрĕç министрĕ кăна çĕнĕ çынсем. Çулйĕр министрне — Вилхо Аккала «патриотла халăх движенийĕ» партин членĕ), çĕрĕç министрне — Тойво Иконена (аграрлă парти членĕ) лартнă.

**
*

Иогани Рангель — адвокат — 1894 улта çуралнă. Рютипе пĕрле Рангель Финляндири государство банкĕн пуçĕнче тăнă. Премьер-министра ларниччен Рангель Финляндири государство банкĕн директорĕ пулнă.

ЮТÇĔРШЫВСЕНЧЕ

▲ Лондонри «Таймс» хаçатăн Португалири корреспондентне Лукаса унтан 48 сехет хушшинче тухса кайма хушнă. Лукаса кăларса ямалла туни Португали правительстви унăн чылай статьисемпе килĕшменнинчен килсе тухнă.

▲ Италири «Реджиме фашиста» хаçат декабрĕн 29-мĕшĕнче тухнă номерте Португалине хыттăн критикленĕ. «Юлашки ĕрнесенче çак çĕршыв Англие вăйлăн мухтать», тесе критиклет хаçат Португалине. Хаçат: Португалия нейтралитет тытса тăрас тĕлĕшпе хăйĕн обязательствисене хыттăн пăсать, вăл Итали çине ытла та килĕштермесĕр пăхать, тесе çырать.

Укерчĕк çинче: çĕнĕ çул каç Шупашкарти кинотеатрта пулнă балмаскарад.

К. Бабаев фото-ӳкерчĕкĕ.

Çăмăл шухăш

Декабрĕн 28-мĕш кунĕ. Анчах пĕлместпĕр, те ирхине ирех, те кăнтăрла умĕн, районри суту-илӳ пайĕн заведующийĕн Ивановăн пуçне пĕр тарăн шухăш пырса кĕнĕ. Мĕнле шухăш пулнă вăл — ăна чылайĕшĕ тавçăрса илеймесĕр тăнă. Хăшĕсем ăна кăшт чухласа илнĕ: Иванов ĕçе пырсанах темĕнле цифрăсем çине пăхса ларма тытăннă. Вăл цифрăсем 1940 çулти таварçаврăнăш планне мĕнле тултарнине кăтартнă. Имшеркке вĕсем, начар. Иванов вĕсене курсан пĕрре çӳçенсе илнĕ, тепре куçне чарса пăрахнă. Юлашкинчен ура çине сиксе тăнăга, хĕрсе сăмах калама пуçланă.

— Капла май килмест. Таварçаврăнăш планне тултармалла пулать. Плана тултарас тесен, тавара базарсене, ярмăркăсене илсе тухса сутмалла. Эпир халь, юлташсем...

Малалла темĕн каласшăн пулса, аллине çӳлелле çĕкленĕ вăл, анчах хăйĕн умĕнче никам та çуккине асăрханă. Хăйĕнчен аяккарах, кантăк умĕнчегата икĕ кĕтесре, халăх-хуçалăх учет управленийĕн инспекцийĕнче ĕçлекен ĕçтешĕсем нимĕн чĕнмесĕр хăйсен ĕçĕсене туса ларнă. Суту-илӳ пайĕн заведующийĕ урăх нимĕн чĕнмесĕр сунтăхĕнчен хут кăларса, шултра, шухăша мĕн кĕнине пĕр тан саспаллисемпе çырма пуçланă:

«Ырантан, то-есть базар кунĕнчен, декабрĕн 29-мĕш числинчен пуçласа, Калининора, базар вырăнĕнче, то-есть столовăй патĕнчи площадьре, виçĕ кунлă çĕнĕ çул ярмăрки уçăлать. Ярмăркăна пурте килме пултараççĕ. Гӳрлĕрен ассортиментлă таварсем пуласçĕ».

Çакнашкал хутсем айне вăл «торготдел» тесе алă пуснă та, вĕсене йăлтах базар пулакан вырăна, то-есть, столовăй патĕнчи площадьри тата ун сывăхĕнчи телефон юписем, кĕлетсем, картасем сумне çыпăçтарса тухнă.

«Ыран ярмарка пулать ĕнтĕ,—тенĕ вăл хăй тĕллĕн, — объявленисем çапăй. Хамăн та кунта килсе курмалла пулать».

Ку хыпар, вăл пĕлтерӳ хучĕсене çăхи тĕттĕм сăн çапнă чухне кăна сыпăстарса тухнă пирки, район центрĕнчи ĕççыннисем хушшине вăл кунах сарăлаймарĕ. Темĕнле майпа тĕл пулса вулакансем пулнă-и тен вăл пĕлтерӳсене, анчах çĕр хута сăмах çарса çӳреме вĕсене аван мар пек тунăннă. Клуб хупă тăнă. Çынсене ытти çĕрте тĕл пулма кансĕртерех кунта, хăшĕсем выртса çывăрнă.

Тепĕр кунне ирех район центрĕ ярмарка çинчен каласа тытăннă. Лавка умĕнче-и, столовăйĕнче-и, урам варринче-и, пĕр-пĕр çын хăйĕн юлташне тĕл пулсан, унпа ярмарка пирки сăмах пуçласа янă:

— Эсĕ, Анна Григорьевна, ярмăркăна каятăн-и?

— Аçта, мĕнле ярмăркăна?

— Вот тата, мĕнле ярмарка, тет, обыкновеннăй ярмарка, только новогодний.

— Но, чăнах-и?

— Чăнах пулмасăр. Виçĕ кун хушши пырать. Курăн ак.

Ярмарка çинчен кашни харпăрхăй пĕлнĕ пек каласа, ярмарка мĕнле пулассине аякран курса тăнă хăшĕсем.

— Паян столовăйĕнче халăх нумай пулать.

— Аçтан пĕлетĕн?

— Пĕлмесĕр. Паян ярмаркăна çынсем нумай килеççĕ.

— Мĕнле ярмăркăна?

— Асту, эс пĕлместĕн пулать.

Калининори ĕççыннисем, юлашкинчен, пĕрре çакна ĕненмесĕр тăнă: мĕнле вара паян кăна ярмарка пуласси çинчен пĕлтернĕ, паян ярмарки пухăнать?

Ку ыйту çине татăклă ответ илес тесе ку çынсем суту-илӳ пайĕн заведующийĕ Иванов юлташ патĕнче пулнă. Вăл çапла ответ панă:

— Ярмарка вăйлă пулать. Ярмăркăна темĕн те пĕр тухать: ялхуçалăх продуктисем, промтоварсем, кондитер изделийĕсем, шорнăй таварсем т. ыт. те килеççĕ. Лавкасем суту-илӳ тума тухаççĕ. Ярмăркăна колхозсем хăйсен çимĕçĕсемпе, артельсем хăйсен таварĕсемпе килмелле.

— Ярмарка пуласси çинчен вĕсем пĕлнĕ-и?

— Пĕлнĕ ĕнтĕ. Ĕнер Калининора пĕлтерӳсем çапса тухрăмăр-çке. Çав пĕлтерӳсене вулакан çынсем урлă вĕсем пĕлме кирлĕ. Ăна пĕлсен вĕсем кунта тĕпĕртетсех килеççĕ.

Лайăх та, анчах çăмăл шухăшлă пулнă суту-илӳ пайĕн заведующийĕ. Патне çитсе тăрсан ши-и! шăхăрнă вăл. Çапла ярмарка тума, 1940 çулхи таварçаврăнăш планне тултарма шухăшланă. Çăмăл шухăш! 1941 çул çитсе кĕнĕ. Кăçал çав çăмăл шухăш суту-илӳ ĕçĕнче текех ан пултăр! Мĕнмĕн тумалла, вăл малтанах курăнса тăтăр!

ИВ. МОСЕЕВ.

Юлашки почтăран

АВТОР

«Ленин çулĕпе» хаçатăн (ВКП(б) Шупашкар райкомĕпе районри Советăн хаçачĕ) 1940 çулти декабрĕн 27-мĕшĕнчи номерĕнче «Раштав — класс тăшманĕсен праздникĕ» ятлă статья пичетленсе тухнă. Статья авторĕ — Л. Семенов.

Калас пулать, районри хаçатсенче тĕне хирĕçле статьясем ытла та сахал пичетленнĕ пирки, çакăн пек факт пире питех те савăнтарчĕ. Райхаçат редакцийĕ, тĕне хирĕçле статьясем пичетлеме пуçласа, паллах, пархатарлă, усăллă ĕç тăвать. Кун пек пуçарушăн «Ленин çулĕпе» редакцине тав тусан та ытлашшиех пулмĕ-и, тен. Анчах...

Анчах та, статьяна унăн авторĕ çинчен пĕр-икĕ сăмах калас пулать. Паллах ĕнтĕ, содержани енчен статьяна хурлама çук. Ыйтусене статьяра тĕрĕс çутатса панă. Автортан çакна çăна ыйтас килет: ăçтан тупнă-ши вăл çав источниксене?

Пĕр вырăнта, сăмахран, автор пире çапла ĕнентерет: «Флавий Христос çуралнă тенĕ вăхăтри событисене тĕплĕн те тарăнăн кăтартса парать. Анчах та Иссус çинчен пĕр сăмах та асăнман. Çавăн пекех I—II-мĕш ĕмĕрсенче пурăннă Плутарх, Тацит историксем, Перский, Лукан поэтсем, Филон, Юст писательсем Иссус çинчен пĕр факта та палăртман».

Тĕрĕс. Кун пирки нимĕн чухлĕ те иккĕленместпĕр эпир. Çакăнта асăннă историксем, поэтсем тата писательсем, вĕсен ĕçĕсене пăхса тухнă историксемпе ученăйсем калаçă тăрăх, чăнах та Христос çинчен пĕр сăмах та асăнман. Пире çакă кăна иккĕлентерет: статья авторĕ çав историксемпе писательсен ĕçĕсене пăхса тухнă-ши?

Тепĕр вырăнта тата автор: «историллĕ материалсене пăхса тухнă хыççăн Иссус нихăçан та çуралманнине, тĕнĕмелле хăватсем туса çӳременнине иван куратпăр» тесе çырать.

Ыйтас килет: историллĕ мĕнле материалсене пăхса тухнă-ши автор статья çырас умĕн?

Нумай калаçса тăмасăрах çакна калама пулать: паллах, автор историллĕ мĕнĕле документсене те, I—II-мĕш ĕмĕрсенче пурăннă историксемпе писательсем çырнă мĕнĕле ĕçсене те пăхса тухман. Статьяна пуçласа вĕсене çитиех вырăсла чĕлхепе тухнă учебниксенчен çырса илнĕ. Хушаматне вара хăйĕнне лартнă.

Калама та çук, питех те çăмăл ĕç. Анчах, статьяна мĕнле источниксем тăрăх çырнине кăтартнă пулсан авăнрах пулнă пулĕччĕ, унчухне автор хăй тӳрĕ кăмăллă пулни пуриншĕн те паллă пулнă пулĕччĕ. Çакна тума вара Л. Семенов юлташăн темĕншĕн хăюлăх çитмен.

Ку кăна мар-ха. Автор тата, статьяна куçарса илнине пĕрлех, материала тĕплĕн, тарăннăн шухăшласа ăнланма тăрăшман пирки, куçарнă чухне те чылай йăнăшсем тунă. Пĕр вырăна, сăмахран, çапла куçарнă: «Куратăр ĕнтĕ евангелистсем «Христос çуралнă» тенĕ фонта мĕнле сăрласа кăтартаççĕ». Тем тени пулать вара ку? Тепĕр вырăна тата: «Вăл праçникне христианла тĕн персисенчен, египетсенчен илнĕ» тесе куçарнă. Мисе Перссия, мисе Египет-ши автор шучĕпе? Сăмах, ăнланатпăр ĕнтĕ, перссемпе египтянсем çинчен пырать пулас.

Çавăнпа пĕрлех статьяра тĕрĕс мар куçарнă сăмахсем те пур. Сăмахран, Вифлеем сăмаха Вилфлейм, «Апокалипсис» сăмаха «Апоколипсис», Изида сăмаха Изид туса куçарнă.

Тытăннă ĕçе тĕплĕн пĕлмен тата ăна çăмăллăн тума шутланă чухне яланах çавăн пек пулать ĕнтĕ вăл.

Колхозсене 138 пин тенкĕ кивçен укçа панă

КУКЕÇ. Государство банкĕн Кӳкеçри уйрăмĕ 1940 çулта колхозсене 138 пин тенкĕ кивçен укçа парса пулăшнă. Вăл тенкĕ панă.

шутран обществăллă вылăх-чĕрлĕхсем илме 86.200 тенкĕ, витесем тума 30.000

С. Гаврилов.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Чăваш АССР Совнаркомĕ, РСФСР Совнаркомĕ çумĕнчи Экономсовет йышăннă тăрăх, Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнче издательствăпа Полиграфин хозразчетлă Управленине тунă, вăл управлени 1941 çулти январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа ĕçлеме тытăнчĕ.

Совнарком Чăваш АССР Наркомместпромне республикăри полиграфи промышленноçĕн предприятийĕсем пурне те Издательствăпа Полиграфи Управленине пама хушнă.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Издательствăпа Полиграфи Управленин начальникĕ пулса ĕçлеме Совнарком С. А. Мощицкий юлтăша лартнă.

Йĕлтĕрçĕсен эстафети

Январĕн 5-мĕшĕнче, физкультурăпа спорт ĕçĕсен Шупашкар хула комитечĕ, хĕллехи спорт сезонĕ уçăлнă ятпа йĕлтĕрçĕсен эстафетине ирттерчĕ. Çак эстафета кашни çулах пулса иртнипе хулари ĕççыннисен тата спортсменсен йăлине кĕнĕ.

Кăçал эстафетăна «Восход», «Динамо», «Медик», «Спартак», «Строитель», «Большевик», «Буревестник» спорт обществисен, ялхуçалăх институчĕн т. ыт. командăсем те хутшăнчĕç. Хулари тата республикăри паллă йĕлтĕрçĕсем: А. Бурцев, Г. Иванов, Ю. Васильев, А. Беспалов, М. Гущина т. ыт. юлташсем те хăйсен спорт обществисен чыслă ятне малалла та хăйсенчех хăварас ĕмĕтпе эстафетăна тухрĕç.

«Восход» спорт обществин çамрăк йĕлтĕрçĕсенчен тăракан команди (тренерĕ Г. Иванов) 4 х 5 километрлă дистанцине 1 сехет те 42 минут та 32 секундăра чупса тухса пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ.

«Медик» спорт обществин команди иккĕмĕш, «Динамо» команди виççĕмĕш вырăна тухрĕç.

Хĕрарăмсенчен «Спартак» обществин команди мала тухнă. Çак командăра Самойлова, Блинова тата Лобастова юлташсем тăнă. Вĕсем 3 х 3 километрлă дистанцине 1 сехет те 6 минутра чупса тухнă.

«Медик» спорт обществин команди иккĕмĕш вырăна, ялхуçалăх институчĕн команди виççĕмĕш вырăна тухнă.

Арçынсемпе хĕрарăмсен командисене пĕрле илсен пĕрремĕш вырăна «Медик» командине панă. Иккĕмĕшне виççĕмĕш вырăнсене «Восход» тата «Спартак» командисем уйăрнă.

СУД

Государство пурлăхне çаратнăшăн

Шупашкарти «Заготзерно» пунктĕн бухгалтерĕ Гурий Суриков, Сĕнтĕрвăрри райпотребсоюзăн закупщикĕ Андрей Шорокинпа пĕр шухăшлă пулса, спецторг столовойĕн склад заведующине Алексей Осипова хăйсемпе пĕрле обществăллă пурлăха çаратас ĕçе явăçтарнă. Вĕсем «Заготзерно» пунктĕнчен тырă çаратма нумай вăхăт хушши шухăшласа пурăннă. Кашниех уйăрăм ĕçсем тума пуçланă.

Суриков складран çăнăх илмелли документсем хатĕрленĕ. Вăл складран тырă панă кивĕ доверенность хучĕсене çурса илнĕ, хăй аллипе çĕнетсе 5 тонна ыраш çăнăхĕ илме юрăхлă туса хатĕрленĕ.

Çак суя документсемпе 1940 çулти ноябрĕн 28-мĕшĕнче Шорокинпа Осипов «Заготзерно» пунктĕнчен 5 тонна ыраш çăнăхĕ илнĕ. Çаратнă çăнăха малтан хăйсем ятларласа килĕшсе татăлнă хваттерсене вырнаçтарнă.

Вĕсем, çаратнă çăнăха вырнаçтарса тăма, П. А. Соколова, А. Васильева, М. Т. Майорова, И. Миронова тата З. Осипова хăйсем майлă çавăраççĕ. Çаксем çаратнă çăнăха шанчăклă çĕре вырнаçтарса пурăннă.

Чăваш АССР Верховный Сучĕ çак ĕçе пăхса тухса Суриковпа Шорокина перçе пăрахмалла, вĕсен пурлăхĕсене туртса илмелле, А. Б. Осипова 10 çуллăха тĕрмене хупмалла тата хăйне тивĕçлĕ пурлăха туртса илмелле тунă.

Соколова, А. Васильева, М. Майорова тата З. Осипова кашнине 5-шер çуллăха, И. М. Миронова 3 çуллăха тĕрмене хупса лартмалла турĕ.

ПАРТКАБИНЕТРА

Паян, январĕн 7-мĕшĕнче, ВКП(б) Шупашкар горкомĕн парткабинетĕнче агитаторсем, докладчиксем тата беседчиксем валли «Январĕн 9-мĕш кунĕ» ятлă темăпа группăллă консультаци пулать. Консультант — Сютрюков юлташ.

Консультаци каçхине 8 сехетре пуçланать. Пурте ирĕклĕнех кĕме пултараççĕ.

* * *

Ыран, январĕн 8-мĕшĕнче, ВКП(б) Шупашкар горкомĕн парткабинетĕнче «Вырăссен аслă поэчĕн Некрасовăн творчестви çинчен» темăпа тӳлевлĕ, публичнăй лекци пулать. Лектор — Сутягин юлташ.

Лекци каçхине 8 сехетре пуçланать. Билетсене парткабинетра лекци пуçланас умĕн илме пулать.

Парткабинет.

Ответлă редактор Р. О. МАЛЮТИН.

Кăваш лаша (ăйăр) пырса ерчĕ, çилхи сулахай енче, çара çуна кӳлнĕ. Адрес. Гужтранспорт ГКО, ул. Союзная, д. № 5:

Албанири тата Африкăри вăрçă

(Декабрĕн 30-мĕшпе январĕн 4-мĕш хушшинчи вăрçă ĕçĕсене пăхса тухни)

Иртнĕ эрне хушшинче Албанипе Греции фронтра палăлă улшăнусемех пулман. Итали войскисем, подкреплени илнĕ хыççăн, хăйсен позицийĕсене хăйсен аллинчех тытса тăраççĕ тата фронтăн хăшпĕр участокĕсенче контратакăсем тăваççĕ.

Фронт линийĕ Греци çарĕшĕн ытла пайăхах мар. Итальянецсем Клисурăна Тепелене хулисене хăйсен аллинчех тытса тăраççĕ, вĕсем кунта çĕнĕ подкрепленисем илсе килсех тăраççĕ. Савна май Греци çарĕн сылтăм флангĕ умне те тата сулахай флангĕ умне те пысăк хăрушлăх тухса тăрать. Итальянецсем Клисура—Тепелене районĕнчи Преметпа Корча еннелле контрнаступлени тума пултарсан, çакă вăл Грецин Поградецпа Корча районĕнчен Эльбасан çинелле наступлени туса пыракан войскисен мĕнпур çитĕнĕвĕсене пĕтерсе лартасси патне илсе тыма пултарать. Итальянецсем Тепелене — Аргирокастрон — Дельвине—Кониспполис еннелле наступлени туса пырсан, вĕсем грексен кăнтăрти пĕлĕм группировкине тытса илсе, ăна тинĕс патнелле хĕссе пыма пултарнă пулĕччĕç. Çак пулса тăнă лару-тăрува шута илсе, Греци командованийĕ Эльбасана тытса илес задачăна вăхăтлăха аякалла хăварнă пулмалла, Эльбасана туртса илни пĕтĕм кампанин кунçулне татса панă пулĕччĕ, тата хăйсен мĕнпур вăйĕсене Тепелене—Клисура районне туртса илес çĕре çуçармалла туса хунă пулĕччĕ. Куншпа пĕрлех Греци войскисем Химара — Валона районĕнче итальянецсен позицийĕсене çав-çавах атакăласçĕ-ха, грексем итальянецсем Валона порчĕ урлă подкрепленисем илсе пыраççине чарса лартма тăрăшаççĕ пулмалла.

Англипе Греци самолечĕсен тĕп задачи — итальянецсене Албанине подкрепленисем илсе пыма чарса лартасси пулса тăрать, çак майпа вĕсем Валонăпа Дураццо порчĕсем çине тăтăшах пыра-пыра бомбăсем пăрахаççĕ. Авиацине пĕрле Адриатика тинĕсĕнче Грецин тинĕс-çар флочĕ те хăйĕн ĕçне тума тытăннă. Кун çинчен Грецин тинĕс министерстви къларнă коммюнике те кăтартса парать, унта Грецин «Папаниколис» ятлă подводнăй лодки Италин виçĕ транспортне путарни çинчен пĕлтернĕ, пӳтарнă транспортсен водоизмещенийĕ 25—30 пин тонна.

Албанири фронтра вăхăтлăха стабилизаци пулни вăл çанталăк начар тăнинчен кăна мар, пуринчен ытларах вăйсене пĕр çĕрелле пухса вĕсене çĕнĕлле йĕркеленинчен, подкрепленисем илсе пырса малашнехи операцисене хатĕрленнинчен килнĕ. Италири Стефани агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Вăтаçĕр тинĕсĕн зонинче сывлăш-çар операцийĕсене Германи авиацийĕн корпусĕ хутшăнмалла, вăл корпус Итали авиацийĕпе пĕрле противника хирĕç кĕрешме, Италине пырса çитнĕ.

* * *

Çурçĕр Африкăра Англи войскисем Бардине пырса кĕмелли вырăнсене йышлăн пухăнаççĕ, вĕсем кунта таткăлă наступлени тума хатĕрленеççĕ. Анчах та Ливири условисем, Сиди-Баррани районĕнчи пек, вăрçă ĕçĕсене туса пыма Англи войскисемшĕн юрăхлах мар. Сиди-Баррани районĕнче Англи войскисем çитĕнӳсем тăвас çĕрте танксем пысăк вырăн йышăннă. Ливире пачах урăхла. Барди таврашĕнчи çырма-çатралла вырăнсем Италли войскисен оборонине çăмăллатаççĕ. Кунта Англи танкĕсене çӳреме питех те кансĕр. Кунсăр пуçне, Англи войскисен положенине çакă та йывăрлатать: вĕсен тылĕсем 300 километра çити сапаланса кайнă, ку вăл Барди патĕнчи укрепленисене атакăлама артиллерие пĕр çĕрелле пухса пырассине тата подкрепленисем илсе пырассине йывăрлатать.

Итали командованийĕн Ливире контрнаступлени организацилеме вăйсем çителĕклĕ таранах пур. Унăн пиллĕкмĕш армби пур, ăна вырăнтан та тапратман-ха. Итали войскисен боеприпассемпе горючи çителĕксĕрлех пулмалла; Италин вуннăмĕш армийĕ наступлени тума хатĕрленнĕ вăхăтра çав боеприпассемпе горючисен чылай пысăк пайĕ Сиди-Баррани районĕнче пулнă, кайран ăна англичансем туртса илнĕ.

* * *

Хĕвелтухăç Африкăра çапăçусем вăйлăнах пыраççĕ. Кассалапа Галабат районĕнче, Италин Хĕвелтухăç Африкипе Англо-Египетски Судан чиккинче, разведка тăвакан пысăк мар отрядсем хушшинче кăна çапăçусем пулса пыраççĕ. Кунта вăрçă ĕçĕсем вăйлăн сарăлса кайни пулман, ку вăл Англи командованийĕ хăйĕн тĕп вăйĕсене Çурçĕр Африкăри фронтра пухса тăратнинчен килнĕ пулмалла.

Майор А. КЕЧИЕВ.

Редакци адресĕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати. Телефонсем: редакторăн—0—67, редактор заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, экономика пайĕн—0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн —2—30, «Капкăн» тата «Ĕçĕрăмĕ» журналсен—6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн—0—85, издательство заведующийĕн—5—38, конторăн—0—23.

НТ 2179

Гор. Чебоксары, типография № 1 Наркомместпрома ЧАССР, заказ № 2, ф. б. 59×84 п. л.